27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945
ЯНВАРЬ
23
ЫТЛАРИКУН
15(6766) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТӖН
ТАТАШУПАШКАР ХУЛАСОВЕТӖН
ХАҪАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Украинӑри 1-мӗш фронт ҫарӗсен командующине

Совет Союзӗн Маршалне КОНЕВА

Фронт штабӗн начальникне

Арми генералне СОКОЛОВСКИЕ

УКРАИНАРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем, ЧЕНСТОХОВА хулинчен хӗвеланӑҫнелле наступлени туса пырса, Германин кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫ чиккинчи вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ оборонине татнӑ та, НИМӖҪ СИЛЕЗИЙӖ ҫӗрне 90 километр сарлакӗш фронтпа 30 километр шалалла кӗрсе кайса, паян, январӗн 21-мӗшӗнче, КРАЙЦБУРГ, РОЗЕНБЕРГ, ПИТШЕН, ЛАНДСБЕРГ тата ГУТТЕНТАГ хулисене — ҫулсен паха узелӗсене тата нимӗҫсен БРЕСЛАУ хулине пырса кӗмелли ҫулсене хӳтӗлекен оборонин вӑйлӑ тӗреклетнӗ пункчӗсене — туртса илнӗ.

Нимӗҫ Силезийӗ ҫӗрне кӗрсе каяссишӗн тата КРАЙЦБУРГ, РОЗЕНБЕРГ, ПИТШЕН, ЛАНДСБЕРГ тата ГУТТЕНТАГ хулисене туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне ҫаксем чапа тухнӑ: КОРОТЕЕВ генерал-полковникӑн, ЖАДОВ генерал-полковникӑн, КОЛОМИНОВ генерал-майорӑн, ЛЯМИН генерал-майорӑн, МАРТИРОСЯН генерал-майорӑн, АКИМОВ генерал-лейтенантӑн, РОДИМЦЕВ генерал-лейтенантӑн, ЛЕБЕДЕНКО генерал-лейтенантӑн, БАКЛАНОВ генерал-майорӑн ҫарӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-полковникӗн НОВИКОВАН, РЫБАЛКО генерал-полковникӑн, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн БАХМЕТЬЕВАН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ИВАНОВАН, танковӑй ҫарсеен генерал-майорӗн КУЗНЕЦОВАН; ЧУГУНКОВ полковникӑн; ГЛАДНЕВ полковникӑн; БЕЛОУСОВ подполковникӑн, ТИМОФЕЕВ полковникӑн, СИЯНИН полковникӑн танкисчӗсем; артиллери генерал-майорӗн ФАУСТОВАН, артиллери генерал-майорӗн ПОЛУЭКТОВАН, артиллери генерал-майорӗн ОГАНЕСЯНАН, артиллери генерал-майорӗн САНЬКОН, артиллери генерал-майорӗн КОЛЕСОВАН артиллерисчӗсем; авиаци генерал-полковникӗн КРАСОВСКИН, авиаци генерал-майорӗн ПРОМИНАН, авиаци генерал-лейтенанчӗн РЯЗАНОВАН, авиаци генерал-майорӗн СЛЮСАРЕВАН, авиаци генерал-лейтенанчӗн БЛАГОВЕЩЕНСКИН, авиаци генерал-лейтенанчӗн УТИНАН, авиаци генерал-лейтенанчӗн, ПОЛБИНАН, авиаци генерал-лейтенанчӗн АРХАНГЕЛЬСКИН летчикӗсем; инженери ҫарӗсен генерал-лейтенанчӗн ГАЛИЦКИН, ГЛЕЗЕР полковникӑн, ПОДОЛЫННЫЙ полковникӑн, КАМЕНЧУК полковникӑн ҫарӗсем; ҫыхӑну ҫарӗсен генерал-лейтенанчӗн БУЛЫЧЕВАН, ДОЛЕНКО подполковникӑн, БОГОМОЛОВ полковникӑн, БОРИСОВ полковникӑн, ОБЛАТЬКО полковникӑн связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, Нимӗҫ Силезийӗ ҫӗрне кӗрсе каяссишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене «СИЛЕЗСКИ» тесе ят парас тата орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, январӗн 21-мӗшӗнче, 20 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, икҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, Украинӑри 1-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, НИМӖҪ СИЛЕЗИЙӖ ҫӗрне кӗрсе кайнӑскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, Нимӗҫ Силезийӗ ҫӗрне кӗрсе каяссишӗн ҫапӑҫнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТАВАТАП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1945 ҫулхи январӗн 21-мӗшӗ. № 237.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Белоруссири 3-мӗш фронт ҫарӗсен командующине

Арми генералне ЧЕРНЯХОВСКИЕ

Фронт штабӗн начальникне

Генерал-полковника ПОКРОВСКИЕ

БЕЛОРУССИРИ 3-мӗш фронт ҫарӗсем, паян, январӗн 21-мӗшӗнче, Хӗвелтухӑҫ Пруссири ГУМБИННЕН хулине — ҫулсен паха узелне тата нимӗҫсен КЕНИГСБЕРГ хули енчи оборонин вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ пунктне—штурмласа туртса илнӗ.

ГУМБИННЕН хулине туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне ҫаксем чапа тухнӑ: ЛУЧИНСКИЙ генерал-лейтенантӑн, КРЫЛОВ генерал-полковникӑн, РОГАЧЕВСКИЙ генерал-майорӑн, ПРИХИДЬКО генерал-майорӑн, БАТИЦКИЙ генерал-майорӑн, АЛЕКСАНДРОВ генерал-майорӑн, ШВАРЕВ генерал-майорӑн, ВЛАДЫЧАНСКИЙ генерал-майорӑн, ДАНИЛОВ генерал-майорӑн, КУЗНЕЦОВ генерал-майорӑн, ШАЦКОВ полковникӑн, СЫЧЕВ генерал-майорӑн, НЕСТЕРЕНКО полковникӑн, КОРЧИКОВ генерал-майорӑн, ТУРЧИНСКИЙ генерал-майорӑн, ЦУКАРЕВ полковникӑн ҫарӗсем; артиллери генерал-полковникӗн БАРСУКОВАН, артиллери генерал-майорӗн ПЕТРОПАВЛОВСКИН, ЮСКОВИЧ полковникӑн, артиллери генерал-майорӗн КОЛОТИЛОВАН, КИРИЛЛОВ полковникӑн, ВИШНЕВСКИЙ полковникӑн, МАЛЬЦЕВ полковникӑн, ТЕРЕХИН подполковникӑн, ВЫБОРНОВ майорӑн, артиллери генерал-майорӗн ФЕДОРОВАН, ПОПОВ полковникӑн, СОКОЛОВ полковникӑн артиллерисчӗсем; БАБЕНКО полковникӑн, КИРИЛЛОВ подполковникӑн, БУГАЕВ подполковникӑн, МАКАРКИН подполковникӑн, ЛОБАНОВ полковникӑн, КУЛИКОВ полковникӑн, СУРНИН подполковникӑн, ЕЛЬНИКОВ майорӑн, ПРОХОРОВ подполковникӑн, СЕРДЕЧЕНКО подполковникӑн, ТЮТЮНИК подполковникӑн, ГОЛОВАНОВ подполковникӑн танкисчӗсем; ПРУТКОВ полковникӑн, ЗАКЛЕП подполковникӑн, ХАТМИНСКИЙ полковникӑн, РОДИН подполковникӑн, ДЕЛЬФИНО майорӑн летчикӗсем; инженери ҫарӗсен генерал-лейтенанчӗн БАРАНОВАН, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ЖИРОВАН, АНТОНОВ полковникӑн, СОКОЛОВ полковникӑн саперӗсем; ҫыхӑну ҫарӗсен генерал-лейтенанчӗн БУРОВАН ПЛОТКИН полковникӑн связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, ГУМБИННЕН хулине туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене «ГУМБИННЕНСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, январӗн 21-мӗшӗнче, 22 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, ҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа вуникӗ хут пӗр харӑс персе, БЕЛОРУССИРИ 3-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, ГУМБИННЕН хулине туртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, ГУМБИННЕН хулине туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТАВАТАП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1945 ҫулхи январӗн 21мӗшӗ. № 238.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Белоруссири 2-мӗш фронт ҫарӗсен командующине

Совет Союзӗн Маршалне РОКОССОВСКИЕ

Фронт штабӗн начальникне

Генерал-лейтенанта БОГОЛЮБОВА

БЕЛОРУССИРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем нимӗҫсен Хӗвелтухӑҫ Пруссин кӑнтӑр чиккинчи вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ оборонине татнӑ та, ХӖВЕЛТУХӐҪ ПРУССИ ҫӗрне 80 километр сарлакӗш фронтпа 25 километр шалалла кӗрсе кайса, паян, январӗн 21-мӗшӗнче, НАЙДЕНБУРГ, ТАННЕНБЕРГ, ЕДВАБНО тата АЛЛЕНДОРФ хулисене—нимӗҫсен оборонин тӗреклетнӗ паха пункчӗсене—туртса илнӗ.

ХӖВЕЛТУХӐҪ ПРУССИЕ кӗрсе каяссишӗн тата НАЙДЕНБУРГ, ТАННЕНБЕРГ, ЕДВАБНО тата АЛЛЕНДОРФ хулисене туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне ҫаксем чапа тухнӑ: ГУСЕВ генерал-лейтенантӑн, ГОРБАТОВ генерал-полковникӑн, ГЛЕБОВ генерал-лейтенантӑн, ИВАШЕЧКИН генерал-лейтенантӑн, ФОКАНОВ генерал-лейтенантӑн, ГАРЦЕВ генерал-майорӑн, КОЛГАНОВ генерал-лейтенантӑн, УРБАНОВИЧ генерал-лейтенантӑн, КУЗНЕЦОВ генерал-лейтенантӑн, НИКИТИН генерал-майорӑн, КОНОВАЛОВ генерал-майорӑн, ТЕЛКОВ полковникӑн, МИХАЛИЦИН генерал-майорӑн, ВЕРЕВКИН генерал-майорӑн, КАЛЬНИЙ полковникӑн, ГРЕКОВ полковникӑн, ПАШКОВ полковникӑн, ГРИГОРЬЯН полковникӑн, ОПЯКИН генерал-майорӑн, ЦЫПЛЕНКОВ полковникӑн, КАЗАКЕВИЧ генерал-майорӑн ҫарӗсем; артиллери генерал-полковникӗн СОКОЛЬСКИН, артиллери генерал-лейтенанчӗн ТИМОТИЕВИЧАН, артиллери генерал-майорӗн ВДАДИМИРОВАН, артиллери генерал-майорӗн КОРОЧКИНАН, ШЛЕПИН полковникӑн, КОРОЛЕВ полковникӑн, артиллери генерал-майорӗн МАЛОФЕЕВАН артиллерисчӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн САХНОН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн МАЛАХОВАН, ШИМАНОВСКИЙ полковникӑн, ГРИШИН полковникӑн, ПОЛУКАРОВ полковникӑн, ГНЕЗДИЛОВ полковникӑн, МИХАЙЛОВ полковникӑн, КОЛЕСНИКОВ подполковникӑн танкисчӗсем; ОСЛИКОВСКИЙ генерал-лейтенантӑн, ЧЕПУРКИН генерал-майорӑн, БРИКЕЛЬ генерал-майорӑн, КАЛЮЖНЫЙ генерал-майорӑн кавалерисчӗсем; авиаци генерал-полковникӗн ВЕРШИНИНАН, авиаци генерал-майорӗн АЛЕКСЕЕВАН, авиаци генерал-лейтенанчӗн БАЙДУКОВАН, авиаци генерал-майорӗн ГЕТЬМАНАН, авиаци генерал-майорӗн ФЕДОРОВАН, ДОДОНОВ полковникӑн, РЫБАКОВ полковникӑн, ЯКУШИН полковникӑн, БЕРШАНСКАЯ майорӑн, БАРДЕЕВ подполковникӑн летчикӗсем; инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн БЛАГОСЛАВОВАН саперӗсем; ҫыхӑну ҫарӗсен генерал-майорӗн БОРЗОВАН связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, ХӖВЕЛТУХӐҪ ПРУССИН кӑнтӑр районӗсене кӗрсе каяссишӗн ҫапӑҫнӑ чухне уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене «ТАННЕНБЕРГСКИ» тесе ят пама, орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, январӗн 21-мӗшӗнче, 23 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, икҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, Белоруссири 2-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, НАЙДЕНБУРГ, ТАННЕНБЕРГ, ЕДВАБНО, АЛЛЕНДОРФ хулисене туртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене. ХӖВЕЛТУХӐҪ ПРУССИН кӑнтӑр районӗсене кӗрсе каяссишӗн ҫапӑҫнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТАВАТАП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1945 ҫулхи январӗн 21-мӗшӗ. № 239.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Белоруссири 3-мӗш фронт ҫарӗсен командующине

Арми генералне ЧЕРНЯХОВСКИЕ

Фронт штабӗн начальникне

Генерал-полковника ПОКРОВСКИЕ

БЕЛОРУССИРИ 3-мӗш фронт ҫарӗсем паян, январӗн 22-мӗшӗнче, Хӗвелтухӑҫ Пруссири ИНСТЕРБУРГ хулине — ҫулсен паха узелне тата нимӗҫсен КЕНИГСБЕРГ хули патнелле пымалли ҫулсем ҫинчи оборонин хӑватлӑн ҫирӗплетнӗ районне — штурмласа туртса илнӗ.

ИНСТЕРБУРГ хулине туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне ҫаксем чапа тухнӑ: ГАЛИЦКИЙ генерал-полковникӑн, КРЫЛОВ генерал-полковникӑн, СЕМЕНОВ генерал-лейтенантӑн, ПРИХИДЬКО генерал-майорӑн, ЗАВАДОВСКИЙ генерал-лейтенантӑн, КОШЕВОЙ генерал-лейтенантӑн, ГУРЬЕВ генерал-майорӑн, КАЗАРЦЕВ генерал-майорӑн, ИВАНОВ генерал-майорӑн, АЛЕКСАНДРОВ генерал-майорӑн, БАТИЦКИЙ генерал-майорӑн, ЧЕРНОВ генерал-майорӑн, КАРИЖСКИЙ генерал-майорӑн, ПРОНИН генерал-майорӑн, БУРМАКОВ генерал-майорӑн, КАЗАРЯН генерал-майорӑн, ЛАСКИН генерал-майорӑн, КАЛИНИН генерал-майорӑн, МАКСУТОВ генерал-майорӑн, КАТЮШИН полковникӑн, ДОНЕЦ генерал-майорӑн, КУЗНЕЦОВ генерал-майорӑн, ВЛАДЫЧАНСКИЙ генерал-майорӑн, РЫБАЛКО полковникӑн ҫарӗсем; артиллери генерал-полковникӗн БАРСУКОВАН, артиллери генерал-лейтенанчӗн СЕМЕНОВАН, артиллери генерал-майорӗн ФЕДОРОВАН, артиллери генерал-майорӗн ЯКОВЛЕВАН, артиллери генерал-майорӗн ПОПОВАН. ПАВЛОВ полковникӑн, ТОРОПОВ полковникӑн, АВРААМОВ полковникӑн, КУЗНЕЦОВ полковникӑн, СОКОЛОВ полковникӑн, ПОПОВ полковникӑн, ЖЕВНОВ полковникӑн, СТАРЫНИН полковникӑн, СКВОРЦОВ полковникӑн, ДОЛГОВ полковникӑн, АКСЕНОВ полковникӑн, БОГДАНОВ полковникӑн, КРИВОШАПОВ полковникӑн артиллерисчӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-полковникӗн РОДИНАН, ПРОКОПЕЦ полковникӑн. СЕМЕНЮК полковникӑн, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн БУРДЕЙНЫЙАН, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн БУТКОВАН, ЖОГ подполковникӑн, ДРОБЫШ подполковникӑн, ХАЧЕВ подполковникӑн, ЗАХАРОВ подполковникӑн, ПРОХОРОВ подполковникӑн, СЕРДЕЧЕНКО подполковникӑн, ТЮТЮНИК подполковникӑн танкисчӗсем; авиаци генерал-полковникӗн ХРЮКИНАН, авиаци генерал-майорӗн БЕЛОВАН, ЧУЧЕВ полковникӑн, авиаци генерал-майорӗн НЕЧИПОРЕНКАН, авиаци генерал-майорӗн МОЛОКОВАН, ПРУТКОВ полковникӑн, ЗИМИН полковникӑн, авиаци генерал-майорӗн ЗАХАРОВАН, ХАТМИНСКИЙ полковникӑн, ЕГОРОВ полковникӑн, ШИНКАРЕНКО полковникӑн, ЗАКЛЕП подполковникӑн, АНДРЕЕВ полковникӑн, авиаци генерал-майорӗн ШЕВЧЕНКАН, авиаци генерал-майорӗн АНДРЕЕВАН, КУРБАТОВ полковникӑн летчикӗсем; инженери ҫарӗсен генерал-лейтенанчӗн БАРАНОВАН, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ЗВЕРЕВАН, ЛЕПМАН полковникӑн, ЛУКАШЕНКО полковникӑн, ПОПЛАВСКИЙ подполковникӑн саперӗсем; ҫыхӑну ҫарӗсен генерал-лейтенанчӗн БУРОВАН, ДАВЫДЕНКО полковникӑн, ПРИХОДАЙ полковникӑн связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, ИНСТЕРБУРГ хулине туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене «ИНСТЕРБУРГСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, январӗн 22-мӗшӗнче, 19 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, икҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, Белоруссири 3-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, ИНСТЕРБУРГ хулине туртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, ИНСТЕРБУРГ хулине туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТАВАТАП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1945 ҫулхи январӗн 22-мӗшӗ.
№ 240.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Белоруссири 1-мӗш фронт ҫарӗсен командующине

Совет Союзӗн Маршалне ЖУКОВА

Фронт штабӗн начальникне

Генерал-полковника МАЛИНИНА

БЕЛОРУССИРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем, малалла наступлени туса пырса, паян январӗн 22-мӗшӗнче, ХОЭНЗАЛЬЦА (ИНОВРОЦЛАВ), АЛЕКСАНДРОВ, АРГЕНАУ тата ЛАБИШИН хулисене—ҫулсен паха узелӗсене тата нимӗҫсен БРОМБЕРГ (БЫДГОЩ) хули патнелле пымалли вырӑнсенчи оборонин тӗреклетнӗ пункчӗсене—ҫапӑҫса туртса илнӗ.

ХОЭНЗАЛЬЦА (ИНОВРОЦЛАВ), АЛЕКСАНДРОВ, АРГЕНАУ тата ЛАБИШИН хулисене туртса илесесишӗн ҫапӑҫнӑ чухне ҫаксем чапа тухнӑ: БЕЛОВ генерал-полковникӑн, ПЕРХОРОВИЧ генерал-майорӑн ҫарӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-полковникӗн БОГДАНОВАН, РАДЗИЕВСКИЙ генерал-лейтенантӑн, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ВЕДЕНЕЕВАН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ТЕЛЯКОВАН, ЧЕРЯПКИН полковникӑн, КОПЫЛОВ полковникӑн, ПОТАПОВ полковникӑн, ШАМАРДИН полковникӑн, АБРАМОВ полковникӑн, МАКАРОВ полковникӑн, ПАВЛУШКО полковникӑн, ОХМАН полковникӑн, МЕРКУЛОВ подполковникӑн, ПАШКОВ полковникӗн, ЖИЛА подполковникӑн, ДМИТРИЕВ подполковникӑн, НОРУЦКИЙ полковникӑн, ГУРЕНКО майорӑн, КОЧКАРЕНКО майорӑн, БУДАЛИН полковникӑн, МИТЕНКОВ подполковникӑн, БУГАЕНКО майорӑн танкисчӗсем; КРЮКОВ генерал-лейтенантӑн кавалерисчӗсем; ГРЕХОВ полковникӑн, ЗАЗИРНЫЙ полковникӑн, КОТОВ подполковникӑн артиллерисчӗсем; авиаци генерал-майорӗн ТОКАРЕВАН, авиаци генерал-лейтенанчӗн САВИЦКИН, авиаци генерал-майорӗн ДЗУСОВАН, ХОМИН капитанӑн летчикӗсем; БЕЛЬСКИЙ полковникӑн, ВАНДЫШЕВ подполковникӑн саперӗсем; СМОЛИЙ полковникӑн, БЕЛЕНКО полковникӑн связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, ХОЭНЗАЛЬЦА (ИНОВРОЦЛАВ), АЛЕКСАНДРОВ, АРГЕНАУ тата ЛАБИШИН хулисене туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене «ИНОВРОЦЛАВСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, январӗн 22-мӗшӗнче, 20 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, икҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, Белоруссири 1-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, ХОЭНЗАЛЬЦА (ИНОВРОЦЛАВ) хулипе ытти малта асӑннӑ хуласене туртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, ХОЭНЗАЛЬЦА (ИНОВРОЦЛАВ) хулипе ытти малта асӑннӑ хуласене туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТАВАТАП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1945 ҫулхи январӗн 22-мӗшӗ.
№ 241.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Белоруссири 2-мӗш фронт ҫарӗсен командующине

Совет Союзӗн Маршалне РОКОССОВСКИЕ

Фронт штабӗн начальникне

Генерал-лейтенанта БОГОЛЮБОВА

БЕЛОРУССИРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем, Хӗвелтухӑҫ Пруссин ӑшнелле ҫав тери хӑвӑрт наступлени туса пырса, паян январӗн 22-мӗшӗнче, АЛЛЕНШТАЙН хулине — чугун ҫулсемпе шоссе ҫулӗсен паха узелне тата нимӗҫсен оборонин Хӗвелтухӑҫ Пруссири вӑта ҫӗрти районсене кӑнтӑр енчен хӳтӗлесе тӑракан вӑйлӑн ҫирӗплетнӗ пунктне—туртса илнӗ.

АЛЛЕНШТАЙН хулине туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне ҫаксем чапа тухнӑ: ГОРБАТОВ генерал-полковникӑн, ГУСЕВ генерал-лейтенантӑн, НИКИТИН генерал-майорӑн, ФОКАНОВ генерал-лейтенантӑн ҫарӗсем; ОСЛИКОВСКИЙ генерал-лейтенантӑн, ЧЕПУРКИН генерал-майорӑн, БРИКЕЛЬ генерал-майорӑн, КАЛЮЖНЫЙ генерал-майорӑн кавалерисчӗсем; артиллери генерал-майорӗн НЕФЕДОВАН, ПЛАУТИН подполковникӑн, БАРАНОВ майорӑн, ШУБОЧКИН подполковникӑн артиллерисчӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн ЧЕРНЯВСКИН, КАРПОВ подполковникӑн, ГРЕБЕННИКОВ подполковникӑн, СТОЯНОВ подполковникӑн, ГАЙДАЕНКО майорӑн танкисчӗсем; авиаци генерал-майорӗн БОРИСЕНКАН, авиаци генерал-майорӗн ГЕТЬМАНАН, авиаци генерал-лейтенанчӗн ОСИПЕНКАН, ГРИШЕНКО полковникӑн, ЯКУШИН полковникӑн, ВОЛКОВ полковникӑн, ОСИПОВ полковникӑн летчикӗсем; ЗОЛОТАРЕВ подполковникӑн, АМЕЛЬЧЕНКОВ подполковникӑн, СТАРОВОЙТ майорӑн саперӗсем; КУРБАТОВ подполковникӑн связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, АЛЛЕНШТАЙН хулине туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене «АЛЛЕНШТАЙНСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, январӗн 22-мӗшӗнче, 21 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, икҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, Белоруссири 2-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, АЛЛЕНШТАЙН хулине туртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, АЛЛЕНШТАЙН хулине туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТАВАТАП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1945 ҫулхи январӗн 22-мӗшӗ. № 242.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Белоруссири 1-мĕш фронт çарĕсен командующийне.

Совет Союзĕн Маршалне ЖУКОВА

Фронт штабĕн начальникне

Генерал-полковника МАЛИНИНА

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем паян, январĕн 22-мĕшĕнче, хăс пулнă тĕлелле, танковăй соединенисемпе пехота вирлĕн наступлени туса пынине пула, ГНЕЗЕН (ГНЕЗНО) хулине—чугун çулсемпе шоссе çулĕсен паха узелне, нимĕçсен ПОЗНАНЬ хули патне пымалли çулсем çинчи оборонин хăватлăн тĕреклетнĕ пунктне туртса илнĕ.

ГНЕЗЕН (ГНЕЗНО) хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче çаксем чапа тухнă: ЧУЙКОВ генерал-полковникăн, АНТИПЕНКО генерал-лейтенантăн, БЕРЗАРИН генерал-лейтенантăн çарĕсем; танковăй çарсен генерал-полковникĕн КАТУКОВĂН, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн ОРЕЛĂН, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн ШАЛИНĂН, ДРЕМОВ генерал-майорăн, танковăй çарсен генерал-майорĕн ЮЩУКĂН, БАБАДЖАНЯН полковникăн, ГУСАКОВСКИЙ полковникăн, СМИРНОВ подполковникăн, МОРГУНОВ полковникăн, СОЛОВЬЕВ полковникăн, ЛИПАТЕНКОВ полковникăн, АНФИМОВ полковникăн, КОШЕЛЕВ полковникăн, ТЕМНИК полковникăн, ХВАТОВ подполковникăн, ПОНОМАРЕНКО майорăн, ЗЕМЛЯКОВ полковникăн, КУЛИКОВ майорăн, МЕЛЬНИКОВ подплоковникăн, КОБРИН подполковникăн, МИНДОЛИН подполковникăн танкисчĕсем; артиллери генерал-полковникĕн КАЗАКОВĂН, артиллери генерал-майорĕн ФРОЛОВĂН, артиллери генерал-майорĕн МЯСОЕДОВĂН, артиллери генерал-майорĕн КАМИНСКИН, КУЗЬМИН полковникăн, КАРАИЧЕВ полковникăн, КАГАН полковникăн, БОНДАРЕНКО полковникăн, ЩЕДРИН полковникăн, ВОЛКОВ подполковникăн, ГОРОХОВЕЦ подполковникăн, РАСПОПИН подполковникăн, ЖИЕНКО майорăн, БИКЕТОВ майорăн, САВИН майорăн артиллерисчĕсем; инженери çарĕсен генерал-полковникĕн ПРОШЛЯКОВĂН, ХАРЧЕВИН полковникăн, БОРИСОВ полковникăн, ТРАХТЕНБЕРГ подполковникăн, ТИМАШЕВ майорăн саперĕсем; çыхăну çарĕсен генерал-лейтенанчĕн МАКСИМЕНКĂН, ЗАХАРОВ подполковникăн, ИВАНОВ подполковникăн, ТУНИК подполковникăн, ВАКИШ подполковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă ĕçентерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, ГНЕЗЕН (ГНЕЗНО) хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăçсене «ГНЕЗНЕНСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, январĕн 22-мĕшĕнче, 22 сехетре, пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, икçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, Белоруссири 1-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, ГНЕЗЕН (ГНЕЗНО) хулине туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, ГНЕЗЕН (ГНЕЗНО) хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТАВАТАП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăça вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене—вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1945 çулхи январĕн 22-мĕшĕ.
№ 243.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Белоруссири 2-мĕш фронт çарĕсен командующине

Совет Союзĕн Маршалне РОКОССОВСКИЕ

Фронт штабĕн начальникне

Генерал-лейтенанта БОГОЛЮБОВА

БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт çарĕсем, ăнăçлă наступление малалла туса пырса, паян, январĕн 22-мĕшĕнче, хăç пулса кил нĕ тĕлелле, Хĕвелтухăç Пруссири ОСТЕРОДЕ тата ДОЙТШ-АЙЛАУ хулисене—çулсен паха узелĕсене тата нимĕçсен оборонин вăйлă çирĕплетнĕ пункчĕсене—çапăçса тытса илнĕ.

ОСТЕРОДЕ тата ДОЙТШ-АЙЛАУ хулисене туртса илессишĕн çапăçнă чухне çаксем чапа тухнă: ФЕДЮНИНСКИЙ генерал-полковникăн, КОКОРЕВ генерал-лейтенантăн, ПОЛЕНОВ генерал-лейтенантăн, РАДЫГИН генерал-майорăн, БОРЩЕВ генерал-майорăн, ЛЯЩЕНКО генерал-майорăн çарĕсем, танковăй çарсен генерал-полковникĕн ВОЛЬСКИН, танковăй çарсен генерал майорĕн СИДОРОВИЧĂН, танковăй çарсен генерал-майорĕн САХНОН, танковăй çарсен генерал-майорĕн МАЛАХОВĂН, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн ПОПОВĂН, ШИМАНОВСКИЙ подполковникăн, ГРИШИН полковникăн, ПОЛУКАРОВ полковникăн, ГНЕЗДИЛОВ полковникăн, МИХАЙЛОВ полковникăн, КОЛЕСНИКОВ полковникăн, ЛИТВИН подполковникăн, СОМОВ полковникăн, ТУРЕНКОВ подполковникăн, ДАВИДЕНКО полковникăн, ПИВНЕВ подполковникăн, ФИШКИН майорăн, КУРНИКОВ майорăн танкисчĕсем, артиллери генерал-майорĕн КАЗАКОВĂН, ВОРОНИЧ полковникăн, ИВЛЕВ полковникăн, БАЛЬСИН подполковникăн, ПЕТРОВ полковникăн, ГРЕЦОВ полковникăн артиллерисчĕсем, авиаци генерал-полковникĕн ВЕРШИНИНĂН, авиаци генерал-майорĕн АЛЕКСЕЕВĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн БАЙДУКОВĂН, ВИНОГРАДОВ полковникăн, КАЛУГИН полковникăн, СМОЛОВИК полковникăн, РЫБАКОВ полковникăн; ВУСС полковникăн, ДОДОНОВ полковникăн, авиаци генерал-майорĕн ФЕДОРОВĂН, КАЗАЧЕНКО подполковникăн летчикĕсем, ЦВАНГЕР полковникăн, ДУГАРЕВ полковникăн саперĕсем, БАХИЛИН полковникăн, МИНИН полковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă ĕçентерĕве ялан лăха палăртса хăварас тесе, ОСТЕРОДЕ тата ДОЙТШ-АЙЛАУ хулисене туртса илессишĕн çапăçнă чухне уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăçсене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, январĕн 22-мĕшĕнче, 23 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, икçĕр çирĕм тăвата тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, Белоруссири 2-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, ОСТЕРОДЕ тата ДОЙТШ-АЙЛАУ хулисене туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, ОСТЕРОДЕ тата ДОЙТШ-АЙЛАУ хулисене туртса илессишĕн çапăçнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТАВАТАП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1945 çулхи январĕн 22-мĕшĕ.
№ 244.

В. М. Молотов Франци профсоюзĕсен делегацине йышăнни

Январĕн 20-мĕшĕнче СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов Франци профсоюзĕсен делегацине йышăннă. Делегацие çаксем кĕреççĕ: Б. Фрашон —делегаци руководителĕ, Пĕтĕмĕшле Ĕç Конфедерацийĕн секретарĕ, Л. Сайян—Пĕтĕмĕшле Ĕç Конфедерацийĕн секретарĕ тата Хирĕç тăрса кĕрешекен Халăх Совечĕн председателĕ А. Газье — Пĕтĕмĕшле Ĕç Конфедерацийĕн секретарĕ, Л. Лябрус —Строительство рабочийĕсен конфедерацийĕн генеральнăй секретарĕ, М. Дюпюи — Чугун çул рабочийĕсен федерацийĕн секретарĕ.

Йышăнура ВЦСПС председателĕ В. В. Кузнецов тата ВЦСПС секретарĕсем М. П. Тарасова Е. Я. Сидоренко пулнă.

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕ, Великобританипе Çурçĕр Ирландин Пĕрлешӳллĕ Королевстви тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем Венгрипе перемири çинчен тунă КИЛĔШӲ

Венгрин Вăхăтлăх Халăх Правительстви, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзне, Пĕрлешӳллĕ Королевствăна, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене тата Пĕрлешнĕ ытти Нацисене хирĕç туса пыракан вăрçăра Венгри поражени тӳснĕ факта йышăнса, Çӳлерехре асăннă Виçĕ Державăн, Венгрипе вăрçакан мĕнпур Пĕрлешнĕ Нацисен интересĕсемшĕн тăраканскерсен, Правительствисем лартнă перемири условийĕсене йышăнать.

Çӳлерехре кăтартса панине шута илсе, Союзлă (Совет) Главнокомандованин Представителĕ Совет Союзĕн Маршалĕ К. Е. Ворошилов, Венгрипе вăрçакан мĕнпур Пĕрлешнĕ Нацисен интересĕсемшĕн тăракан Совет Союзĕн, Пĕрлешӳллĕ Королевствăн тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительствисенчен çав ĕçе тума тивĕçлĕ полномочи илнĕскер, пĕр енчен, тата Венгрин Вăхăтлăх Халăх Правительствин Представителĕсем—Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Дьендеши Янош господин, Оборона Министрĕ генерал-полковник Вереш Янош тата министрсен кабинечĕн Статс-Секретарĕ Балог Иштван господин, тивĕçлĕ полномочи илнĕскерсем, тепĕр енчен, аяларахра кăтартнă çак условисене алă пуснă:

1. а) Венгри Совет Союзне тата Пĕрлешнĕ ытти Нацисене хирĕç, ку шутра Чехословакие хирĕç те, туса пыракан вăрçăран тухрĕ. Германипе тытакан çыхăнусене пурне те татрĕ тата Германие хирĕç вăрçа тухни çинчен пĕлтерчĕ.

в) Венгри Правительстви Германин Венгри территорийĕ çинчи хĕçпăшаллă вăйĕсене хĕçпăшалсăрлантарма тата вĕсене тытăка лекнĕ çар çыннисен шучĕпе союзниксен аллине пама пулать.

Венгри правительстви çавăн пекех тата Германи гражданĕсене тытса чарма сăмах парать.

ц) Венгри Правительстви Союзлă (Совет) Главнокомандовани пĕтĕмĕшлĕн ертсе пынипе усă курма юракан типсĕр çинчи, тинĕс çинчи тата сывлăшри çар вăйĕсене тытса тăма тата вĕсене союзниксен аллине пама сăмах парать. Венгри пĕтĕмпе 8 пехотнăй дивизирен кая мар, çав дивизисене вăйлатмалли хатĕрсемпе пĕрле, кăларса тăратать. Çав вăйсемпе союзниксен территорийĕсем çинче усă курма юрамасть, вĕсемпе унта тивĕçлĕ Союзлă Правительство килĕшсен çеç усă курма юрать.

д) Германие хирĕç пыракан вăрçă ĕçĕсем чарăннă хыççăн, Венгрин хĕçпăшаллă вăйĕсене демобилизацилемелле те Союзниксен Контроль Комиссийĕ сăнаса тăнипе вĕсене мирлĕ йĕркене куçармалла. (1-мĕш статья çумне Хушса çырнине пăхăр).

2. Венгри хăй оккупациленĕ Чехословаки, Югослави, Румыни территорийĕсем çинчен мĕнпур Венгри çарĕсемпе чиновникĕсене 1937 çулхи декабрĕн 31-мĕшĕччен пулнă Венгри чиккисен шал еннелле куçарса кĕме, çавăн пекех тата Чехословаки, Югослави тата Румыни территорийĕсене Венгри çумне сыпăçтарас тĕлĕшпе тунă мĕнпур законсене, администраци йĕркисене пĕтерсе тăкма сăмах парать.

3. Союзлă (Совет) Главнокомандовани вăрçă валли кирлĕ тесе шутласан, Венгри Правительствипе Венгрин Главнокомандованийĕ Совет çарĕсене тата ытти Союзниксен çарĕсене Венгри территорийĕ тăрăх кирек хăш еннелле те ирĕклĕн куçса çӳреме май туса параççĕ. Венгри Правительствипе Венгрин Главнокомандованийĕ вара çав çарсене çĕр çинче, шыв тăрăх, сывлăшра куçса çӳреме хăйсен транспорт хатĕрĕсене парса пур енчен те пулăшаççĕ тата вĕсене хăйсен шучĕпе куçараççĕ. (3-мĕш статья çумне Хушса çырнине пăхăр).

4. Венгри Правительстви союзниксен мĕнпур тыткăна лекнĕ çар çыннийĕсене тата тытса чарнă çынсене халех ирĕке кăларать. Çĕнĕ инструкцисем иличчен Венгри Правительстви союзниксен тыткăна лекнĕ мĕнпур çар çыннийĕсене тата тытса чарнă çыннисене, вăрçă пыракан вырăнсенчен куçарса янă тата куçса кайнă çынсене, çав шутра Чехословакипе Югослави гражданĕсене те, çителĕклĕ апат-çимĕç, тумтирсем, медицина пулăшăвĕ тата санитарипе гигиена хатĕрĕсем парать, çавăн пекех тата çав çынсенчен кашнине хăйĕн государствине таврăнма транспорт хатĕрĕсем парать.

5. Пĕрлешнĕ Нацисене усă кӳрес тесе ĕçленĕшĕн е Пĕрлешнĕ Нацисен ĕçне кăмăлланăшăн, е тата мĕнле расăран тухнине кура е мĕнле тĕне тытса тăнине кура хупса лартнă мĕнпур çынсене, вĕсем мĕнле çĕршывсен гражданĕсем тата мĕнле наци çыннисем пулнине пăхса тăмасăр, Венгри Правительстви халех ирĕке кăларать. Çавăн пекех тата тĕрлĕ нацисене хĕсĕрлекен кирек мĕнле законсене те тата çав законсем тăрăх тунă хĕсĕк условисене те пăрахăçа кăларать.

Куçарса кайнă çынсене е вăрçă пыракан вырăнсенчен куçса кайнă çынсене, Венгри çĕрĕ çинче пурăнаканскерсене, ку шутра еврейсемпе гражданствăна кĕмен çынсене те, хăйсен гражданĕсене хӳтĕленĕ пекех хӳтĕлемелле тăвас тата хăрушлăхсăр пурăнмалла тăвас тесе, Венгри Правительстви тивĕçлĕ мерăсене пурне те йышăнать.

6. Пĕрлешнĕ Нацисен çĕрĕсем çинчен вăрçă вăхăтĕнче Венгрие турттарса кайнă мĕнпур хаклă япаласемпе материалсене, государство, общество тата кооперации организацийĕсен, предприятисемпе учрежденисен е уйрăм гражданисен хаклă япалисемпе материалĕсене, уйрăмăн илсе кăтартсан: фабрикăсемпе заводсен оборудованине, паровозсене, чугун çул вагонĕсене, тракторсене, автомашинăсене, историллĕ памятниксене, музейри хаклă япаласене тата ытти тĕрлĕ пурлăхсене Венгри Правительстви Союзниксен Контроль Комиссийĕ кăтартса панă сроксенче Совет Союзне, çавăн пекех тата Чехословакипе Югославие, Пĕрлешнĕ ытти Нацисене пĕтĕмĕшпех юсавлăн тавăрса пама сăмах парать.

7. Венгри Правительствипе Венгрин Главнокомандованийĕ Германин Венгри çĕрĕ çинчи пĕтĕм çар пурлăхне, çав шутра Германи флочĕн суднисене те, трофейсем вырăнне хурса, Союзлă (Совет) Главнокомандованин аллине пама пулаççĕ.

8. Венгри Правительствипе Венгрин Главнокомандованийĕ Германин е унăн гражданĕсемпе çыннисен, Венгри территорийĕ çинче е вăл йышăннă территорисенче пурăнаканскерсен, кирек мĕнле пурлăхĕсене те (вăл шутра хаклă япаласемпе валютăна та), Союзлă (Совет) Главнокомандовани ирĕк памасăр Венгрирен илсе тухса кайма е вĕсене туртса илме памастпăр тесе сăмах параççĕ. Вĕсем çав пурлăха Союзниксен Контроль Комиссийĕ тунă йĕрке тăрăх пăхса усрама пулаççĕ.

9. Пĕрлешнĕ Нацисен Венгрири Дунай порчĕсенче тăракан мĕнпур суднисене, вĕсем халĕ камăн аллинче тăнине пăхмасăр, вĕсемпе союзниксен пĕрлĕхлĕ интересĕсемшĕн Германие хирĕç вăрçнă вăхăтра усă курмашкăн Венгри Правительствипе Венгри Главнокомандованийĕ Союзлă (Совет) Главнокомандованин аллине пама пулаççĕ. Кайран çав суднăсене вара хăйсен хуçисене тавăрса параççĕ.

Çӳлерехре кăтартнă пурлăхсене Союзлă (Совет) Главнокомандованин аллине паричченех вĕсене мĕнле те пулин сиенленĕшĕн е пĕтерсе тăкнăшăн Венгри Правительстви пĕтĕмĕшпех хăй материальнăй ответ тытать.

10. Венгрин суту-илӳ суднисем, Венгри шывĕ çинче тăраканнисем те, ют çĕршывсен шывĕсем çинче тăраканнисем те, вĕсемпе Союзниксен пĕтĕмĕшлĕ интересĕсемшĕн усă курмашкăн Союзлă (Совет) Главнокомандованин оперативнăй контрольне пăхăнса тăраççĕ.

11. Венгри Правительстви Союзлă (Совет) Главнокомандованине, хăйĕн ĕçĕсене тума кирлĕ пулма пултарнă таран, çавăн пекех тата Союзлă Государствăсен миссийĕсемпе представительствисен нушисене тивĕçтерме кирлĕ таран, Венгри валютипе шутласа укçа тӳлесе тăма тивĕçлĕ, çавăн пекех тата тĕрлĕ таварсем (горючи, апат-çимĕç тата ытти те), хатĕрсем тата пулăшу парса тăма тивĕçлĕ.

Венгри Правительстви çавăн пекех тата Венгри территорийĕ çинче промышленноçпа транспорт предприятийĕсемпе, çыхăну хатĕрĕсемпе, энерги паракан станцисемпе, предприятисемпе, общество усă куракан çуртйĕрсемпе, топливо тата ытти материалсем хумалли складсемпе, кирлĕ пулсан, перемири вăхăтĕнче Союзлă (Совет) Главнокомандовани е Союзниксен Контроль Комиссийĕ кăларнă инструкцисем тăрăх усă курма май туса парать. (11-мĕш статья çумне Хушса çырнине пăхăр).

12. Вăрçă ĕçĕсемпе тата Венгри Совет Союзĕн, Чехословакипе Югослави территорийĕсене оккупациленипе çав çĕршывсене кӳнĕ тăкаксене Венгрин Совет Союзне, Чехословакипе тата Югославие тӳлемелле пулать, çакăнпа пĕрлех, Венгри Пĕрлешнĕ Нацисене хирĕç туса пыракан вăрçăран ахаль кăна мар тухнине, вăл Германие хирĕç вăрçă пуçласа янă çинчен пĕлтернине шута илсе, килĕшӳ тăвакан енсем çапла калаçса татăлаççĕ: асăннă тăкаксене Венгри пĕтĕмĕшпех мар, пĕр пайне кăна тӳлет, уйрăмăн илсен, Америка долларĕпе шутласа, 300 миллион доллар чухлĕ ултă çул хушши таварсем (машина оборудованийĕ, шыв çинчи суднăсем, тĕштырă тата ытти те) парса тăрса, тӳлесе татать, вĕсенчен Совет Союзне тӳлесе татмалли тăкаксен хисепĕ, Америка долларĕпе шутласан, 200 миллион доллар чухлĕ, Чехословакипе Югославие тӳлесе татмалли тăкаксен хисепĕ 100 миллион доллар чухлĕ пулать.

Венгри ытти союзлă государствăсене тата вĕсен гражданĕсене вăрçă вăхăтĕнче кӳнĕ тăкаксемпе сиенсемшĕн те тӳлесе татать, анчах мĕн чухлĕ тӳлемеллине каярахпа палăртса параççĕ (12-мĕш статья çумне Хушса çырнине пăхăр).

13. Венгри Правительстви Пĕрлешнĕ Нацисен тата вĕсен гражданĕсен Венгри территорийĕ çинчи пĕтĕм законлă прависемпе интересĕсене, вĕсем вăрçăччен мĕнле пулнă çаплипех юсаса йĕркене кĕртме, çавăн пекех тата вĕсен пурлăхĕсене те пĕтĕмĕшпех юсавлăн каялла тавăрса пама пулать.

14. Вăрçăра тунă преступленисемшĕн айăплă çынсене тытса чарас, вĕсене çав çынсемпе интересленекен правительствăсен аллине парас тата вĕсене суд тăвас ĕçре Венгри пĕрле ĕçлеме пулать.

15. Венгри Правительстви Венгри территорийĕ çинчи Гитлер майлă ĕçлекен тата фашистла ытти мĕнпур организацисене — политика тата çар организацийĕсене, çар майлă туса йĕркеленĕ организацисене, çавăн пекех тата ытти организацисене те, Пĕрлешнĕ Нацисене хирĕç пропаганда саракансекерсене, халех салатса яма, малашне вара çавăн пек организацисене усма пачах та чарса лартма сăмах парать.

16. Венгрире вăхăтран вăхăта тата вăхăтсăр тухса тăракан литературăна кăларасси, ăна урăх çĕртен илсе пырасси тата сарасси, театрсемпе киносем кăтартасси, радиостанцисем, почта тата телеграфпа телефон ĕçлесси Союзлă (Совет) Главнокомандованипе калаçса татăлнă тăрăх пулса пырать. (16-мĕш статья çумне Хушса çырнине пăхăр).

17. Венгрин пĕтĕм çĕрĕ çинче фронт линийĕнчен 50—100 километр аяккарахра тăракан вырăнсенче (вырăнти условисене кура) Венгрин гражданла администрацине юсаса йĕркелеççĕ, çакăнпа пĕрлех Венгрин администрациллĕ органĕсем, мирпе хăрушсăрлăха юсаса ура çине тăратас шутпа, Союзлă (Совет) Главнокомандовани е Союзниксен Контроль Комиссийĕ çак перемири условийĕсене пурнăçа кĕртес майпа панă инструкцисемпе кăтартусене пурнăçа кĕртсе пыма сăмах параççĕ.

18. Перемирин пĕтĕм тапхăрĕ валли Венгрире Союзниксен Контроль Комиссине тăваççĕ. Вăл перемири условийĕсене пурнăça кĕртессине йĕркелесе пырать тата вĕсене пурнăçа кĕртнине асăрхаса тăрать. Унăн Председателĕ Союзлă (Совет) Главнокомандованин Представителĕ пулать, унта Пĕрлешӳллĕ Королевствăн тата Пĕрлешӳллĕ Штатсен представителĕсем те хутшăнса ĕçлеççĕ.

Перемири тунă хыççăн Германие хирĕç пыракан вăрçă ĕçĕсем пĕтиччен Союзниксен Контроль Комиссине Союзлă (Совет) Главнокомандовани пĕтĕмĕшле ертсе пырать (18-мĕш статья çумне Хушса çырнине пăхăр).

19. Венăри Третейски Суд 1938 çулхи ноябрĕн 2-мĕшĕнче тата Венăри Арбитраж 1940 çулхи августăн 30-мĕшĕнче йышăннă решенисем çакăнтан вара пăрахăçа тухнă тесе шутланаççĕ.

20. Çак условисем вĕсене алă пуснă вăхăтран пуçласа законлă пулса тăраççĕ.

Çак Килĕшĕве Мускавра, 1945 çулхи январĕн 20-мĕшĕнче, пĕр экземпляр çырса хатĕрленĕ, ăна, вырăс, акăлчан тата венгер чĕлхисемпе çырнăскерне, ССР Союзĕн Правительстви аллине сыхласа усрама панă, вырăс чĕлхипе тата акăлчан чĕлхипе çырнă текстсем чăн тĕрĕс текстсем пулса тăраççĕ.

Çак Килĕшĕвĕн ĕнентермелле çырса илнĕ копине, ун çумне Хушса çырнисемпе пĕрле, ССР Союзĕн Правительстви çак Килĕшĕве алă пуснă кашни ытти Правительствăна парать.

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн, Пĕрлешӳллĕ Королевствăн тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительствисем полномочи панипе
К. ВОРОШИЛОВ.

Венгрин Вăхăтлăх Правительстви полномочи панипе
ДЬЕНДЕШИ ЯНОШ
ВЕРЕШ ЯНОШ
БАЛОГ ИШТВАН.

„Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕ, Великобританипе Çурçĕр Ирландин Пĕрлешӳллĕ Королевстви тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем Венгрипе перемири тăвасси çинчен 1945 çулхи январĕн 20-мĕшĕнче Мускав хулинче алă пуснă Килĕшӳ" çумне ХУШСА ÇЫРНИСЕМ

А. 1-мĕш статья çумне Хушса çырни

Германин хĕçпăшаллă вăйĕсем çинчен тата Германин çар командованийĕн ССР Союзне тата Пĕрлешнĕ ытти нацисене хирĕç вăрçă ĕçĕсем туса пымалли планĕсем çинчен калакан сведенисене, çавăн пекех тата нимĕçсен хĕçпăшаллă вăйĕсен вăрçă ĕçĕсем тĕлĕшпе тунă схемисемпе карттисене, мĕнпур оперативнăй документчĕсене, хăйĕн аллинче пуррисене, Венгрин çар командованийĕ Союзлă (Совет) Главнокомандованийĕ кăтартнă срокра пĕтĕмĕшпех Союзлă (Совет) Главнокомандовани аллине парать.

Германин Венгри территорийĕ çинче пурăнакан гражданĕсене тытса чарас тĕлĕшпе тумалли 1-мĕш статьяра кăтартнă мерăсем çав çĕршывăн еврей нацийĕнчен тухнă гражданĕсене пырса тивмеççĕ.

Б. 3-мĕш статья çумне Хушса çырни

Килĕшĕвĕн 3-мĕш статьинче Венгри Правительствипе Венгрин Главнокомандованийĕ пулăшу памалла тесе кăтартса панă, çакă вăл перемири вăхăтĕнче Союзлă (Совет) Главнокомандовани хăй пăхнă тăрăх вăрçă ĕçĕсенче усă курма кирлĕ тесе шутлакан Венгрин мĕнпур çар сооруженийĕсене, сывлăш-çар тата шыв çинчи çар сооруженийĕсемпе хатĕрĕсене, портсене, казармăсене, складсене, аэродромсене, çыхăну хатĕрĕсене, метеорологи станцийĕсене, вĕсене тытса тăма кирлĕ çынсемпе пĕрле, Союзлă (Совет) Главнокомандованин аллине пĕтĕмпех юсавлăн парассине пĕлтерет.

Ц. 11-мĕш статья çумне Хушса çырни

Союзлă (Совет) Главнокомандовани кăларнă валютăна, Венгри территорийĕнче çӳрекенскере, Венгри Правительстви Союзлă (Совет) Главнокомандовани кăтартса панă срoксенче тата вăл кăтартса панă условисем тăрăх, пĕтĕмпех пухать е сутăн илет, çав майпа пухнă валютăна вара пĕр тӳлевсĕрех Союзлă (Совет) Главнокомандованин аллине парать.

Венгри Правительстви Венгрин ют çĕршывсенчи активне е Венгрин шалти активне, Союзлă (Совет) Главнокомандовани е Союзниксен Контроль Комиссийĕ ирĕк памасăр, ют çĕршыв государствисене е ют çĕршыв гражданĕсен аллине куçармастăп тесе сăмах парать.

Д. 12-мĕш статья çумне Хушса çырни

Килĕшĕвĕн 12-мĕш статьи тăрăх Венгри Совет Союзне, Чехословакие тата Югославие мĕнле таварсем тăратассине, çавăн пекех тата çав таварсене çулсерен мĕн чухлĕ тăратмалли тĕплĕ срокне тивĕçлĕ правительствăсем калаçса татăлнă тăрăх уйрăм килĕшӳпе палăртаççĕ. Çав таварсене 1938 çулхи хаксемпе, промышленность оборудованийĕ çине—15 процент хушса, ытти таварсем çине—10 процент хушса тăратаççĕ.

Çак Килĕшĕвĕн 12-мĕш статьи тăрăх вăрçă тăкакĕсене Америка долларĕпе шутласа тӳлемелле тунă; Америка долларĕ çак Килĕшĕве алă пуснă кун тĕлне ылттăнпа шутласан мĕн хак тăнине, урăхла каласан, ылттăнăн пĕр унцийĕ 35 доллар тăнине шута илнĕ.

12-мĕш статья тăрăх çакна пăхса хунă: Венгри агресси тунине пула сиен курнă Чехословакипе Югослави территорийĕсем çинчи хуçалăха юсама тата халăха пулăшма Венгри Правительстви халех апат-çимĕç продукчĕсемпе ытти тĕрлĕ хатĕрсем парать. Çав апат-çимĕçсемпе таварсене мĕн чухлĕ парассине виçĕ правительство пĕр-пĕринпе калаçса килĕшӳ тунă тăрăх палăртаççĕ, çав таварсене вара Чехословакипе Югослави тӳснĕ сиенсемпе çухатусемшĕн Венгри тӳленĕ шута кĕртеççĕ.

Е. 16-мĕш статья çумне Хушса çырни

Венгри Правительстви Венгрире тăракан посольствăсемпе миссисем тата консульствăсем ют çĕршывсемпе радио тăрăх, телеграфпа çыхăну тытса тăрассине, почтапа çырусем çӳретессине, шифрсемпе çырса тăрассине, курьер урлă çыхăну тытса тăрассине, çавăн пекех тата ют çĕршывсемпе телефон тăрăх çыхăнса тăрассине Союзлă (Совет) Главнокомандовани кăтартса панă йĕрке тăрăх туса пыма сăмах парать.

Ф. 18-мĕш статья çумне Хушса çырни

Килĕшĕвĕн 18-мĕш статьи тăрăх тунă Союзниксен Контроль Комиссийĕ çине перемири условийĕсене мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине контроллесе тăрассине хураççĕ.

Венгри Правительствипе унăн органĕсем Союзниксен Контроль Комиссийĕ панă кăтартусене, перемири çинчен тунă Килĕшӳрен тухса тăраканскерсене, пурне те пурнăçа кĕртсе пыма тивĕçлĕ.

Союзниксен Контроль Комиссийĕ ятарласах хăйĕн органĕсемпе секцийĕсене тăвать, вĕсене вара тивĕçлĕ ĕçсем хушса парать. Кунсăр пуçне, Союзниксен Контроль Комиссийĕ Венгрин тĕрлĕ вырăнĕсенче хăйĕн офицерĕсене тытса тăма пултарать.

Союзниксен Контроль Комиссийĕ Будапешт хулинче вырнаçса тăмалла пулать.

Мускав, 1945 çулхи январĕн 20-мĕшĕ.

Венгрипе тунă перемири Килĕшĕвĕ çумне хушса çырнă ПРОТОКОЛ

Венгри Правительствипе перемири çинчен Килĕшӳ туса алă пуснă чухне çав Килĕшĕве алă пуснă Союзлă Правительствăсем çакăн пирки калаçса татăлнă:

1. «Çар пурлăхĕ» тенĕ сăмаха, 7-мĕш статьяра асăннăскере, çапла ăнланмалла: вăл тăшманăн çар е сурма-çар соединенийĕсем е вĕсен членĕсем тытса тăракан, усă куракан е усă курма пухнă мĕнпур пурлăха е снаряжение пĕлтерет.

2. Венгри Правительстви перемири çинчен тунă Килĕшĕвĕн 9-мĕш статьинче кăтартнă тăрăх тавăрса панă союзниксен суднисемпе Союзлă (Совет) Главнокомандовани усă курасси çинчен тата вĕсене хăçан хăйсен хуçисене тавăрса парасси çинчен Совет Союзĕн Правительстви Союзлă Правительствăсемпе калаçса татăлать.

Çак Протокола Мускавра виçĕ экземпляр çырса хатĕрленĕ, кашнинех вырăс тата акăлчан чĕлхисемпе çырнă, вырăс тата акăлчан чĕлхисемпе çырнисем вара чăн тĕрĕс текстсем пулса тăраççĕ.

Советлă Социализмлă республикăсен Союзĕн Правительстви полномочи панипе В. ДЕКАНОЗОВ.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительствишĕн В. А. ГАРРИМАН.

Пĕрлешӳллĕ Королевство Правительствишĕн Д. БАЛЬФУР.

Ленин çулĕпе, Сталин ертсе пынипе

В. И. Ленин вилнĕренпе 21 çул тултарнă ятпа пулнă хурлăхлă-чаплă ларура

1945 çулхи январĕн 21-мĕшĕнче Г. Ф. Александров юлташ тунă доклад

Юлташсем! Пирĕн мухтавлă парти хăйне туса йĕркелекен аслă Ленин вилнĕренпе 21 çул ĕнтĕ кĕрешсе тата çĕнтерсе пырать. Çынсене вĕсен ĕçĕн результачĕ тăрăх хаклани тĕрĕс пулать пулсан, çакă вара партисем, государствăсем тата халăхсем тĕлĕшпе пушшех те тĕрĕс пулма тивĕçлĕ. Уççăн курса тăракан Ленин совет вăхăтĕнчи çынсен ăрăвĕпе мухтаннă пулĕччĕ. Çак ăру, Ленин кăтартса панисене пурнăçа кĕртсе, Сталин юлташ ертсе пынипе социализмлă общество туса хучĕ, совет государствине тĕреклетрĕ, чи вăйлă çар туса йĕркелерĕ тата фашистла захватчиксене хирĕç виçĕ çул ытла пыракан вилĕмлĕ кĕрешӳре хăйĕн чăн-чăн тăван, ленинла-сталинла ĕçне хӳтĕлесе хăварчĕ.

1. Хĕрлĕ Çар Тăван çĕршыв умĕнчи хăйĕн тивĕçне чыслăн пурнăçа кĕртсе пырать

Отечественнăй вăрçăн иртнĕ çулĕнче Хĕрлĕ Çар таткăлă çĕнтерӳсем турĕ, çав çĕнтерӳсене пула, ылханлă тăшмана Совет çĕрĕ çинчен кăларса ывăтнă. Пирĕн çарсем ирĕклĕхшĕн кĕрешес ырă задачăна пурнăçа кĕртесси анлăн сарăлса кайрĕ. Ленин малтанах кăтартса панисене иртнĕ çул çĕнĕрен çирĕплетсе пачĕ. «Пирĕн мирлĕ ĕçе малашне те чăрмантарса пырас пулсан, —тесе çырнă Ленин,—эпир пĕтĕм халăх вăрçине çĕкленĕпĕр, авантюрăна тата вăрă-хурахла ĕçе хутшăнакансене вара вĕçне çитиех аркатса тăкăпăр».

Паллă ĕнтĕ, Ленин малтанах курса тăнă пекех пулчĕ.

Пирĕн халăх кучухнехи этемлĕхĕн пĕрлехи прогрессиллĕ ĕçне хăй вăйлăн пулăшса пынипе мухтанма тивĕçлĕ. Большевиксен партийĕн нихăçан сӳнми идейисемпе хавхаланса пырса, пирĕн халăх ĕçпе çапăçу хирĕнче хăй паттăрла вăйпа кĕрешнин тивĕçлĕ çимĕçĕсене пухса илчĕ.

Совет государстви вăрçă пынă вăхăтра хăйĕн пĕтĕм хăватне сарса ячĕ. Хĕрлĕ Çар вара, вăй-хăват тата вăрçăри мастерлăх тĕлĕшпе тăшман çарĕнчен нумай малта тăрса, ылханлă тăшмана ленинла, сталинла çапрĕ, ăна вĕлерсе пăрахмаллах пыра-пыра çапрĕ. Фашистсен çарĕсене иртнĕ çулта Совет Союзĕпе Германи хушшинчи пĕтĕм фронтра çине-çинех вăйлăн пыра-пыра çапса аркатрĕ. Крымшăн, Балтика тăрăхĕшĕн, Белоруссишĕн, Молдавишĕн пынă историллĕ çапăçусенче Хĕрлĕ Çар мастерла кĕрешсе çĕнтерчĕ. Нимĕçсен Совет çĕрĕ çинчи юлашки планĕ—оккупациленĕ Совет территорине миллионшар нимĕç салтакĕсен пурнăçне парса та пулин тытса тăрас план путланса ларчĕ. Отечественнăй вăрçăн пĕрремĕш тĕллевне, „Сталин юлташ Хĕрлĕ Çарпа совет халăхĕ умне лартнă тĕллеве, —«Хамăрăн территорисене тата хамăрăн халăхсене нимĕç фашисчĕсен пусмăрĕнчен ирĕке кăлармалли» тĕллеве, — пурнăçа кĕртнĕ.

Çакăнпа пĕрлех совет çарĕсем хĕвеланăç енелле инçе кайрĕç тата, Европăри Германи оккупациленĕ çĕршывсенчен нимĕçсене хăвала-хăвала кăларса, вăрçăра нихăçан пулман походсем турĕç.

Пирĕн çарсем Польшăн, Чехословакин, Югославин пысăк территорине, унти нумай миллионшар халăхсемпе пĕрле, ирĕке кăларчĕç.

Иртнĕ çулта пирĕн паттăр çар Совет Союзĕн чиккисен тулашĕнчи пĕр миллион тăваткал километр ытла территори çинчен нимĕçсене хăваласа кăларчĕ, çав территори çинче халĕ Хĕрлĕ Çар нимĕç пусмăрĕнчен хăтарнă 50 миллион çын ытла пурăнать. Халĕ совет çарĕсем хăйсен ылханлă тăшманĕсене Европа территорийĕ çинче, совет чиккисенчен 300, 400 тата 800 километрта пыра-пыра çапаççĕ.

Халĕ Хĕрлĕ Çар пирĕнпе союзлă Польша тата Чехословаки хирĕсенче вирлĕ наступлени пуçласа ячĕ, нимĕçсен питĕ хăватлă оборонине хăвăрт тата пултарулăн аркатса тăкрĕ. Вăл халĕ Кельце, Радом, Варшава, Ченстохова, Пшасныш, Модлин, Лович, Сохачев, Скерновице, Пиотркув, Краков, Лодзь, Ясло, Горлице, Млава, Дзялдово, Кутно, Томашув, Конице, Прешов, Влоцлавек тата ытти нумай хуласене туртса илчĕ те хĕвеланăçнелле анăçлăн малалла кайса пырать.

Çакă вара Хĕрлĕ Çар хăйĕн ирĕклĕхшĕн кĕрешес аслă задачине ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пынине пĕлтерет.

Хĕрлĕ Çар гитлерла ирсĕрсене Германи çĕрĕ çинче те пĕтерсе пырать. Иккĕленмелли çук, нимĕç çарĕсене фашистла Германи çĕрĕ çинче аркатса тăкас тĕлĕшпе пыракан вăрçă ĕçĕсем уйрăмах хаяр та хĕрӳллĕ пулĕç. Пĕрлешнĕ Нацисен çарĕсен фашистла тискер кайăксем урса кайсах хирĕç тăнине çĕнтермелле пулать. Гитлеровецсен халĕ вăй пур-ха, вĕсем вăйлăн кĕрешĕç. Анчах та тăшман ĕнер паянхинчен вăйлăрах пулнă пулсан, эпир вара паян ĕнерхинчен нумай вăйлăрах.

Наполеон похочĕсем вăхăтĕнчен пуçласа, кашни çирĕм-вăтăр çул хушшинчех нимĕçсем Европăри халăхсене аркатулла та юнлă вăрçа турта-турта кĕртнĕ. Анчах та çак вăхăт хушшинче вăрçă ĕçĕсем нимĕçсен çĕрĕ çинче пĕр хут та пулса иртмен, çавăнпа та, чăннипе илсен, нимĕçсем вăрçă ытти халăхсене кӳнĕ асапсемпе хĕнхуре пĕтĕмĕшпех тӳссе курман. Союзниксен çарĕсене Германи чиккисенче тытса чарас тесе, нимĕçсем халĕ те пĕтĕм вăйне пухаççĕ. Анчах та çакă вăл гитлеровецсене пурпĕрех пĕтсе ларассинчен çăлса хăвараймĕ. Октябрьти Революци пулнăранпа 27 çул тултарни çинчен тунă хăйĕн докладĕнче Сталин юлташ çапла каларĕ: «Пĕрлешнĕ Нацисем халĕ гитлерла Германие хирĕç пыракан вăрçа çĕнтерӳллĕн вĕçлесси умĕнче тăраççĕ. Германие хирĕç пыракан вăрçăра Пĕрлешӳллĕ Нацисем çĕнтерĕç,—çакăн пирки халĕ ĕнтĕ нимĕнле иккĕленӳ те пулма пултараймасть» («Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен», стр. 151). Хĕрлĕ Çар Берлина çĕнтерӳллĕ пырса кĕнипе вăрçа вĕçлессе çирĕппĕн шанса тăрать.

Вăй-хăват, опыт тата вăрçă искусстви тĕлĕшпе пирĕн çар тăшман çарĕнчен вăйлăрах, терĕ Сталин юлташ. Нимĕç çарĕн пысăк традицисем, вăрçă тĕлĕшпе чылаях пысăк опыт, кадровăй офицерсен нумай йышлă корпусĕ, ватă, хатĕрленсе çитнĕ генералитет пулнă. Кучухнехи вăрçа туса пырас тĕлĕшпе çавăн пек пысăк опыт Хĕрлĕ Çарăн вăрçă пуçламĕшĕнче пулман. Анчах Хĕрлĕ Çарăн питех те лайăх пахалăхсем пур, çавăн пек пахалăхсем ытти кирек мĕнле çарăн та çук та, та пулма та пултараймаççĕ. Хĕрлĕ Çар совет мировоззренийĕн малта пыракан идейисем тăрăх социализмлă çĕршыв вĕрентсе ӳстернĕ çынсенчен, çĕнĕ пурнăç тумалли опыта вĕренсе çитнĕ тата йывăрлăхсене хăюллăн çĕнтерме пултаракан çынсенчен тăрать. Совет воинĕсем вĕсем—ĕнер кăна фабрикăсенче, заводсенче, колхозсенче, институтсенче ĕçленĕ малта пыракан çынсем. Большевиксен партийĕ вĕсене хăюллă новаторсем, çĕнĕ пурнăçа тăвакансем, мĕнпур чăрмавсене çĕнтерсе, пĕрмаях тата хăвăрт малалла кайма шутлакан тата кайма пултаракан çынсем, хамăр Тăван çĕршывăн тăшманĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳре нимĕнрен те хăраман çынсем пулма вĕрентсе ӳстернĕ. Парти çавăн пек вĕрентсе ӳстернĕ çынсемшĕн тылра та, фронтра та пурнăçа кĕртме çук е çĕнтерме çук нимĕнле ĕç те пулма пултараймасть. Мирлĕ вăхăтра парти халăха творчествăллă ĕçе çĕклесе, социализмлă строительство ĕçне хутшăнтарса пынă пекех, вăрçă çулĕсенче партин халăха вăрçă опытне, кучухнехи вăрçăн малта тăракан искусствине вĕренсе алла илме çĕклерĕ, совет воинĕсене фашистла нимĕç захватчикĕсене аркатса тăкма ертсе кайрĕ. Вăй-хăват тата вăрçă искусстви тĕлĕшпе Хĕрлĕ Çар кĕске вăхăтрах хăйĕн тăшманĕнчен иртсе кайнине шăпах çакăнпа ăнлантарса памалла та ĕнтĕ.

Тĕлĕнмеллерех пулин те, совет çарĕсем пырса çапнине пула иртнĕ çулта Германи çарĕсем тӳснĕ пысăк пораженисене гитлерла вăрă-хурахсен ушкăнĕн пуçлăхĕсем фашистла политика тата нимĕçсен вăрçă искусстви тунă чи пысăк «çитĕнӳсенчен» пĕри вырăнне хурса хаклаççĕ.

Фашистсен чылаях паллă обозревателĕ Дитмар генерал нумаях та пулмасть çапла каланă: «1944 çулхи çитĕнӳсене» пула нимĕçсем «нихăçан пулман çӳлĕше» çĕкленчĕç, тенĕ. Фашистла пуçлăхсенчен пĕри, Гитлер хушнипе çĕнĕ çул ячĕпе сăмах тухса каласа, нимĕçсем «кивĕ çула пурăнса иртерчĕç тата çĕнĕ çула та çавăн пекех пурăнса иртерĕç», тенĕ. Каламалли те çук, нимĕçсем çĕнĕ çула вĕсем кăçалхи çулăн январь уйăхне пурăнса иртерме пуçланă пекех «пурăнса иртереççĕ» пулсан, вара гитлерла государствăпа унăн çарĕ çывăх вăхăтрах пĕтсе ларĕç, пĕрлешнĕ нацисем çĕнтересси факт пулса тăрĕ, халĕ Германире влаçра тăракан ушкăнсем вара уголовнăй ĕçсемшĕн тата вăрçă пуçласа янăшăн айăпланакансен тенкелĕ çинче ларĕç.

Иртнĕ çулталăк Хĕрлĕ Çарăн Верховнăй Главнокомандованийĕ тăшманăн хĕçпăшаллă вăйĕсене аркатса тăкас тĕлĕшпе тунă тарăн та хăюллă плансем пĕтĕмĕшпех çĕнтернин çулталăкĕ пулчĕ. Пирĕн Государствăн хĕçпăшаллă вăйĕсене советла, ленинла-сталинла организацилени çĕнтерчĕ. Пăрлă океан пуçласа Хура тинĕс патне çитиех вырăнтакан пирĕн фронтсенчи ĕçсем пĕр шухăшла, пĕр тĕллеве пăхăнса тăнă. Полководецăн хальхи пек нумай хĕçпăшаллă вăйсене ертсе пымалла пулнă примера вăрçăсен историйĕ пĕлмест. Хальхи пек йышлă тата питех те лайăх йĕркеленĕ çарсем пĕр задачăна пурнăçа кĕртме пĕрлешнĕ тата уншăн кĕрешнĕ факта вăрçă искусствин историйĕ урăх пĕлмест. Хĕрлĕ Çар иртнĕ çулта вăрçăпа политика тĕлĕшпе пысăк çĕнтерӳсем турĕ, çавăн пек кĕске вăхăтрах ун пек çĕнтерӳсем тунине вăрçă похочĕсен историйĕ урăх пĕлмест. Сталин юлташ Хĕрлĕ Çара, хальхи çарсемпе танлаштарсан, чи хăватлă та чи малта пыракан çар туса хучĕ, кирек кама та, вăл шутрах чи вăйлă тăшмана та, çĕнтерме вĕрентсе Хĕрлĕ Çара хĕçпăшаллантарчĕ.

Çакăн пек ĕнтĕ гитлерла империалистсене хирĕç вăрçă туса пырас тĕлĕшпе пирĕн партин ленинла политики тунă çĕнтерӳсем. Çак çĕнтерӳсем вăрçă ĕçĕнче ленинизм пĕтĕмĕшпех çĕнтерсе чапа тухнине кăтартса параççĕ.

2. Совет государствин вăй-хăвачĕ вĕçĕмсĕр ӳссе пыни

Пирĕн Хĕрлĕ Çар, хăйĕн вăйĕсене пĕрмаях ӳстерсе пырса, фашистсене вăйлăрах та вăйлăрах пырса çапать пулсан, çак кĕрешӳре вара вăл совет государствин вăй-хăвачĕ вĕçĕ-хĕррисĕр ӳссе пыни çине таянса тăрать.

Совет государствине тăвакансем тата унăн çулпуçĕсем — Владимир Ильич Ленин тата Сталин юлташ большевиксен партине социализмлă государство çинчен калакан вĕрентӳпе хĕçпăшаллантарчĕç. Вĕсем вĕрентнĕ тăрăх, социализмлă государство обществăна урăхлатса çĕнетес тата Совет республикисен халăхĕсене тулашри тăшмансенчен хӳтĕлес ĕçре тĕп вăй пулса тăрать. Большевиксен партийĕ çак идейăсене тимлĕн сыхласа усрарĕ, вĕсем вĕрентнĕ тăрăх ĕçлерĕ, хамăрăн государствăна тĕреклетес ĕçе нумай вăй хучĕ. Парти ĕçĕ халĕ хăйĕн лайăх результачĕсене пачĕ. Пирĕн Тăван çĕршыв совет государствин, аслă çулпуçсен планĕ тăрăх тата вĕсем ертсе пынипе тунăскерĕн, вăй-хăвачĕ тĕреклине тата вăл ӳссе пынине пула çăлăнса юлчĕ.

Аса илер-ха Ленинăн малтанах уççăн курса каланă сăмахĕсене: «...Россия çине темĕнле тапăнма хăтлансан та тата Российйăна хирĕç вăрçас тесе темĕн тусан та,—çавăн пек хăтланнисем, тен, пĕрре кăна мар пулĕç,— халĕ ĕнтĕ эпир хамăрăн опытпа вĕренсе пиçĕхнĕ, чăн-чăн опыт кăтартса панă тăрăх, çав хăтланусем пурте тусан пек саланса каяссине пĕлсе тăратпăр. Пирĕн тăшмансем вăрçăпа тапăнма хăтланни хыççăн кашнинчех эпир вĕсем тапăнма хăтланиччен пулнинчен вăйлăрах пулса тухăпăр» (XXV том, 420 стр.).

Государствăн вăйĕпе çирĕплĕхне, вăл тытса пыракан политика тĕрĕссипе прогрессиллине историллĕ аталанăвăн чăн-чăн результачĕсем тăрăх кăна хаклама пулать, тесе вĕрентнĕ Ленин.

Халиччен истори опычĕ çакна кăтартса пачĕ: нумай вăхăта пыракан йывăр вăрçăсем хыççăн халăхсемпе государствăсем, юнлă кĕрешĕве пула вăйсăрланнăскерсем, шалти хирĕçӳсене пула ишĕлсе пынă, общество стройĕн политикăллă тата экономикăллă никĕсĕсем вара вăйсăрланса тата хавшаса пынă. Сăмахран, тĕнчери пĕрремĕш вăрçă хыççăн экономикăпа политика тĕлĕшĕнчи кисренӳсем çĕнтерекен çĕршывсенче те, парăннă çĕршывсенче те пулчĕç. Сталин юлташ çапла кăтартса пачĕ: хальхи вăрçăн йывăр испытанийĕсене, пирĕн халăхăн пурăнса иртерме тивнĕ çав тери йывăр испытанисене, пирĕн государство кăна тӳссе иртерсе çĕнтерме пултарнă,—терĕ.

Отечественнăй вăрçăра Совет государствин вăй-хăвачĕ питех те ӳссе кайрĕ. Совет государстви вăрçă туса пымалли пирĕншĕн лайăх мар условисене лайăх условисем туса хума, вăрçă юхăмне тĕпренех улăштарма, çĕршывăн вĕçĕ-хĕррисĕр нумай пуянлăхне, халăхăн вĕçĕ-хĕррисĕр нумай вăйне пуçтарах халăхăн хăйĕн тата Тăван çĕршывăн пурнăçне хӳтĕлес ĕçе, тăшмана аркатса тăкас ĕçе организацилеме тата вĕсемпе тухăçлăн усă курма пултарчĕ. Совет государствине пирĕн партин планĕ тăрăх пĕтĕм халăх тунине пула, ăна пĕтĕм халăх интересĕсене хӳтĕлеме тунине пула, вăл халăхăн пурнăçне, халăх çĕнтерсе илнисене хӳтĕлесе тăнине пула кăна Совет государстви хăйĕн пысăк рольне пурнăçа кĕртме пултарчĕ.

Совет обществинче кăна пулма пултаракан рабочисемпе хресченсен тата интеллигенцин союзĕ вăрçă вăхăтĕнче хăйĕн никам çĕнтерейми вăйне кăтартрĕ тата тăшмана çапса çĕмĕрме, пирĕн халăхсем темиçе ĕмĕр хушши çĕнтерсе илнисене хӳтĕлесе хăварма майсем туса пачĕ.

Халăх хушшинче вырăс çынни пĕр пысăк çемьи çинчен калакан авалхи халлап сыхланса юлнă, çав халлап тăрăх, тăвансенчен пĕри те хулă çыххине хуçма пултарайман, анчах вĕсенчен кашниех çав хулăсене пĕрерĕн-пĕрерĕн хуçма пултарнă. Ашшĕ ывăлĕсене çапла каланă: «Çапла ĕнтĕ эсир те: килĕштерсе пурăнатăр пулсан, сире никам та çĕнтереймĕ, анчах хирĕçкашма тытăнатăр пулсан тата уйрăмшар çулпа каятăр пулсан, — сире кирек кам та çăмăллăнах тĕп тăвĕ». Пĕр-пĕрипе союзра тата туслăхра пурăннă чухне хăйсем никам çĕнтерейми вăй пулса тăнине Совет Союзĕнчи халăхсем лайăх пĕлсе тăраççĕ; вĕсем кашни уйрăммăн пурăннă пулсан, нимĕç тискер кайăкĕ çавăнпа усă курмасăр юлман пулĕччĕ. Украинăна, Белоруссие, Молдавие тата ытти Совет республикисене вĕсен умне тухса тăнă хăрушлăха пĕтерме вĕсене вырăс халăхĕ тата Совет Союзĕнчи ытти халăхсем пулăшман пулсан, вĕсемпе мĕн пулма пултарассине ăнланса илме йывăрах мар. Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсен кĕрешӳри туслăхĕ пирĕн Тăван çĕршыва ют çĕршыв захватчикĕсенчен çăлса хăварчĕ.

Вăрçă вăхăтĕнче пирĕн совет экономики, пирĕн индустрипе колхоз стройĕ вăрçа ăнăçлăн туса пымалли çирĕп те шанчăклă никĕс пулчĕç. Совет рабочийĕсем, инженерĕсемпе техникĕсем пĕтĕм вăя хурса ĕçленине пула Хĕрлĕ Çарăн халĕ ĕнтĕ танксем, самолетсем, тупăсем нимĕçсеннинчен сахалтарах мар, нумайрах. Çакăнта вара аталанăвăн икĕ хире-хирĕçле çулйĕрĕ уçăмлăн палăрчĕç: фашистла нимĕç государстви ӳксе тата хытăрах та хытăрах вăйсăрланса пынă вăхăтра, совет обществи хытăрах та хытăрах ӳссе пычĕ.

Вăрçă пынă вăхăтра колхоз стройĕн тĕреклĕхĕ, колхоз хресченĕсен патриотизмĕ çĕнĕрен вăйлăн палăрчĕç. Фронта пулăшас тесе вăя шеллемесĕр ĕçлесе, совет хресченĕсем çакна кăтартса пачĕç: вĕсем хальхи вăрçа хăйсен вăрçи, хăйсен тăван тата пурнăçшăн кирлĕ ĕçĕ тесе шутлаççĕ.

Нумаях та пулмасть пĕр ватă хресчен-украинец Польша территорийĕ çинчен Украинăна куçса килме тата колхоза кĕме кăмăл пуррине пĕлтернĕ. Çак хресчен акă мĕнле шутланă: «Германи çарĕ Польшăна тата Европăри ытти нумай çĕршывсене çĕмĕрсе тăкрĕ. Хĕрлĕ Çар Германи çарне çапса çĕмĕрчĕ. Германи çарне çапса çĕмĕрекен совет çарĕ пуринчен ытла колхозниксенчен тăрать вĕт-ха. Колхозниксем фашистсене çĕмĕрессĕ пулсан тата тăван колхоз ĕрĕшĕн хăйсен юнне те шеллемессĕ пулсан, колхозра вĕсем начар мар пурăнаççĕ пулмалла, колхоз вара вĕсемшĕн пурнăçран та хаклăрах. Апла пулсан—эпĕ те колхозлă пурнăçшăн». (ЗАЛРА САВАНÇЛĂН ХУСКАЛАÇÇĔ).

Совет обществинче çуралнă колхоз стройĕ пирĕн вăхăтра хресченсен обществăллă пурнăçĕн чи çӳллĕ тата чи пурнăçлă форми пулса çирĕпленчĕ.

Тăшмана çапса аркатас ĕçе совет интеллигенцийĕ калама çук вăйлăн пулăшрĕ. Сталин юлташ çапла каларĕ: совет интеллигенцийĕ пирĕн вăрçă хуçалăхне малалла ӳстерсе пыма рабочисемпе хресченсене тӳрремĕнех ертсе пыракан пулăшу парать.

Совет халăхĕ хальхи Отечественнăй вăрçăра хăйĕн тăван çĕршывĕшĕн калама çук пысăк кăмăлла, калама çук хавхаланса тата уçăмлăн ăнланса кĕрешет, çакăн пек кĕрешнин примерĕ историре урăх пулманха. Совет государствин вăй-хăватне çĕнтерме е хавшатма пултаракан вăй халĕ çук.

Çирĕммĕш ĕмĕрти ăслăлăхăн чи çӳллĕ пусăмĕнче тăнă тата пирĕн талантлă халăхăн ăс-тăнне пĕтĕçтерсе тăнă Владимир Ильич Ленин çакна лайăх курнă: нумай вăхăта пыракан пысăк вăрçă кирек хăш государствăн çирĕплĕхне те, кирек хăш обществăллă стройăн пурнăçлăхне те, кашни партин мировоззренийĕ тĕрĕссине тата унăн политики прогрессилине çирĕппĕн тĕрĕслени пулса тăрать. Совет государстви çак тĕрĕслеве ытти кирек хăш государствăран та лайăхрах чăтса иртерчĕ. Вăл хăйне фашистсен кĕтĕвĕсем тапăнса килнинчен хӳтĕлесе хăварчĕ кăна мар, тата Европăри нумай халăхсене те вĕсене фашизм чуралантарассинчен çăлса хăварчĕ. Совет государстви халĕ Европăри халăхсене гитлерла тиранирен хăтăлса ирĕке тухма тата хăйсен государствин никама пăхăнманлăхне çĕнĕрен çĕнтерсе илме пулăшать. Советлă Социализмлă Республикăсен аслă Союзĕн ирĕклĕхшĕн кĕрешес ĕçри çак историллĕ ролĕ Совет государствин тĕнчери авторитетне ӳстерме, Совет государствин тулашри политикăллă çыхăнăвĕсене сарма тата çирĕплетме пулăшакан сăлтавсенчен пĕри пулса тăрать.

Çапла вара, Сталин юлташ хамăрăн Совет государствине пĕрмаях ӳстерсе пырас тĕлĕшпе тытса пыракан ленинла аслă политика пĕтĕмĕшпех çĕнтерсе чапа тухрĕ. (АЛА ÇУПАÇÇĔ).

3. Отечественнăй вăрçăра совет халăхĕ идейăпа мораль тĕлĕшпе тунă çĕнтерӳ

Çарсемпе государствăсем вăрçăпа политикăра тунă пысăк çĕнтерӳсен примерне истори сахал мар панă. Анчах та вăрçăра ăнăçлăн çĕнтерекен çавăнпа пĕрлех тăшмана идейăпа мораль тĕлĕшĕнчен те çĕнтернине юлашки ĕмĕрсен историйĕ пĕлместха. Отечественнăй вăрçăра пирĕн çĕршыври халăхсем, вăрçăра çĕнтернипе пĕрлех, идеологипе мораль тĕлĕшĕнчен те пысăк çĕнтерӳсем турĕç.

Хальхи вăрçăра, икĕ мировоззрени кĕрешӳĕнче,—фашистла, рассăллă, нимĕç мар халăхсене пусмăрлассишĕн тата вĕлересе пĕтерессишĕн тăракан мировоззренипе халăхсен туслăхĕшĕн тăракан совет мировоззренийĕ хушшинчи кĕрешӳре,—пирĕн малта пыракан совет мировоззренийĕ тытăклăнах çĕнтерчĕ.

Свастика кĕлеммине çакнă фашистла нимĕç йыттисем пырса кĕнĕ çĕрте пур çĕрте те халăхсемпе государствăсем ирĕклĕхсĕр тăрса юлчĕç, хăйсен никама пăхăнманлăхне çухатрĕç, демократиллĕ çĕршывсен чаплă традицийĕсене пĕр хĕрхенмесĕр пĕтерсе тăкнă, тĕрĕс кăмăллă тата прогрессиллĕ шухăшлă çынсене пурне те концентрациллĕ лагерьсене хупа-хупа лартнă е вĕлерсе пĕтернĕ, ĕççыннисене чурасем туса хунă, халăхсен цивилизациллĕ пурнăçĕн никĕсĕсене пĕтере-пĕтере тăкнă. Нимĕç çарĕсем Европăра хăйсем оккупациленĕ çĕршывсенче тăвакан тискер ĕçсем тискер кайăкла национализмăн тата нимĕç мар халăхсене чурне те кураймасăр тăрассин фашистла идеологийĕпе пĕтĕмĕшпех килĕшсе тăраççĕ. Истори кăтартса панă тăрăх, нихăш государство та нихăçан та хăйĕн идеологийĕпе хăйĕн режимне ытти халăхсене нумай вăхăтлăха, ирĕксĕр майсемпе, тулашран хĕсĕрлесе пăхăнтарма пултарайман. Хальхи вăрçă опычĕ çак тĕлĕшпе уйрăмах лайăх урок пачĕ. Гитлеровецсем, вутхĕмпе тата хĕçпăшалпа, каторгăсемпе тата виселицăсемпе хăратса, Европăри çĕршывсенче фашистла строя, унăн тискер идеологине сарма темĕнле те хăтланчĕç пулин те, вĕсем чурана лекнĕ халăхсен тарăхăвне, партизансен тĕл лекекен пульлисене, патриотсем таткăлăн хирĕç тăрса тавăрнине кăна курма пултарчĕç.

Гитлеровецсем хăйсен тискер кайăкла моральне, хăйсен урса кайнă идеологине пирĕн планета çинче пурăнакан икĕ миллиард ытла çынна ирĕксĕрлесе пăхăнтарма айванла хăтланнисен хурлăхлă результачĕ çакăн пек ĕнтĕ. Отечественнăй вăрçă пынă вăхăтра гитлеризмăн тискер кайăкла идеологине тата ирсĕр моральне пĕр хĕрхенмесĕр тăрă шыв çине кăларасси тата пĕтерсе пырасси анлăн сарăлса кайрĕ. Фашизма çапăçу хирĕсенче кăна мар, идеологи тĕлĕшпе те çапса аркатнă.

Сталин юлташ ирĕклĕхе юратакан халăхсем гитлеризм идеологине хирĕç кĕрешнин итогĕсене уçăмлă сăмахсемпе кăтартса пачĕ. «Рассăллă курайманлăхăн идеологийĕпе политики,—терĕ Сталин юлташ,—гитлерла вăрă-хурахсен блокĕ арканса каясси патне илсе пынă факторсенчен пĕри пулса тăраççĕ. Çакна ăнсăртран пулнă теме юрамасть: нимĕç империалисчĕсене хирĕç Францин, Югославин, Польшăн Чехословакин, Грецин, Бельгин, Данин, Норвегин, Голландин чуралăха кĕрсе ӳкнĕ халăхĕсем кăна мар, тата Гитлерăн вассалĕсем пулнă итальянецсем, румынсем, финсем, болгарсем те çĕкленчĕç. Гитлер ушкăнĕ хăйĕн çынçиенле политикине пула тĕнчери пĕтĕм халăхсене Германие хирĕç тăратрĕ, «суйласа илнĕ нимĕç расси» текенскер вара мĕнпур халăхсем курайман расса пулса тăчĕ».

Идеологипе политики вĕсен пĕтĕмĕшпех панкрута тухнă пулин те, ют çĕршывсенче халĕ те фашистсен хӳрешкисем сахал мар тĕл пулаççĕ, вĕсем вăрçă преступникĕсене каçарасси çинчен икĕпитленсе калаççĕ. Анчах та гитлерла вăрă-хурахсен бандине яланлăхах пĕтерме кирлине халăхсем питĕ йывăр та питĕ хаклă опыт урлă пĕлсе çитрĕç. Гитлеровецсене каçарни вăл—Пĕрлешӳллĕ Нацисен миллионшар гражданĕсене вĕлернишĕн айăплисене, пусмăрçăсемпе çынçиенсене хавасланатарни пулать вĕт-ха! Юнĕçенсене каçарни вăл—гитлеровецсене халĕ поражени тӳснĕшĕн реванш тума хатĕрленме, тĕнчери çĕнĕ вăрçа хатĕрленме çул уçса пани пулать.

Пирĕн çĕршывра гитлерла йытăсене хапăл тăвакан çынсем çук, пулма та пултараймаççĕ. Пирĕн çĕршыври пĕтĕм халăх вăрçă тĕлĕшпе, моральпе политика тĕлĕшпе тата идеологи тĕлĕшпе фашизма йăлтах аркатса тăкма, тĕнчери пĕтĕм халăхсене инкек кӳрекен тискер çăлкуçа—Европăн вăтам пайĕнчи фашистла вăрă-хурахсен йăвине—пĕтĕмĕшпех аркатса тăкма пур енчен те хатĕр.

Гитлеризм моральпе политика тата идеологи тĕлĕшĕнчен поражени тӳсни Ленинпа Сталин туса хунă совет идеологийĕ, халăхсен туслăхĕн идеологийĕ çак вăрçăра пĕтĕмĕшпех çиеле тухнине, рассăсемпе нацисем пĕр-пĕрне кураймасăр тăрассин фашистла идеологине аркатса тăкнине пĕлтерет.

Совет обществине пурнăç кӳрекен пысăк вăйсене çуратса тăракан сăлтавсем—совет халăхĕн халĕ гитлеризма çĕнтерсе пыракан туслăхĕн сăлтавĕсем ăçта-ха?

Халăх туслăхĕ патне илсе пыракан çула, ăна пурнăçа кĕртсе пымалли условисене теори енчен большевиксен партийĕ, партин çулпуçĕсем—Ленинпа Сталин çутатса панă. Пирĕн парти яланах нациллĕ харкашăва хирĕç пулнă, нацисем, рассăсем, халăхсем пĕтĕмĕшле тĕллевшĕн туслăн, пĕрлешсе ĕçлессишĕн тăнă, яланах нациллĕ хирĕçӳсене пĕтерессишĕн тăрăшнă. Нациллĕ харкашăва пĕтĕмĕшпех пĕтерме, пĕр государство ăшĕнче халăхсен тăванла туслăхне тума власть халăх аллинче чухне çеç май пуррине большевиксен партийĕ кăтартса пачĕ, истори опычĕ çакна çирĕплетсе пачĕ. Ăна ăнланмалла та ĕнтĕ. Совет обществин условийĕсенче халăхсен чăн-чăн туслăхĕпе пĕрлĕхне туса хума чăрмантаракан сăлтавсене пĕтернĕ. Кунта нацисене хирĕçтерекен тата вĕсене хире-хирĕç кĕрештерекен, халăха пусмăрлакан классем çук; обществăн пĕчĕк пайĕ пур нацисене те эксплоатациленĕ пирки тĕрлĕ нацисем пĕр-пĕрне шанса тăманни кунта çухалать; халăхсене пусмăрлассине хирĕç вĕçне çитиех тăракан государство, рабочисемпе хресченсен государстви пĕтĕм обществăн интересĕсене хӳтĕлесе тăрать; политикăллă ĕçре, хуçалăхпа культурăна аталантарас ĕçре халăхсем пĕр-пĕрне чун-чĕререн пулăшса тăраççĕ. Совет влаçĕ хăйĕн пĕтĕм ĕçĕпе, хăйĕн пĕтĕм политикипе халăхсене пĕрлештерсе, вĕсен хушшинче туслăх çуратса тăрать. Халăхсен нациллĕ традицийĕсем, обществăн советла йĕркисене пула, пĕтĕм государствăн интересĕсемпе тачă çыхăнса тăраççĕ. Çаксем ĕнтĕ халăхсем авалтанпа хирĕçсе пурăннине пĕтереççĕ, вĕсем хушшинче çĕнĕ, пĕтĕмĕшпех урăхла, тăванла çыхăнусем туса хума пулăшаççĕ.

Çапла вара, совет стройĕ халăхсене пĕрлештерет тата пĕтĕçтерет. Акă мĕншĕн ĕнтĕ Сталин юлташ: Совет стройĕ «халăхсем пĕр государствăра тăванла пĕрлешсе тăрассин никĕсĕ, тĕрекĕ» пулса тăрать, тесе вĕрентет («Марксизм тата нацисем колони ыйтăвĕ», стр. 105).

Пирĕн совет обществин условийĕсенче халăхсен пĕрлĕхĕ ирĕклĕ союз çинче никĕсленсе тăрать. Вăл союз пĕр наци теприне епле те пулин хĕсĕрлессине тӳсме пултараймасть. Вăл союз пур нацисемпе рассăсем те общество, хуçалăх тата культура пурнăçĕн пур енĕсенче те пĕртан правалла пулни çинче, Совет Союзĕнчи пур халăхсем те пĕрне-пĕри пĕтĕмпех шанса, пĕрне-пĕри пулăшса тăни çинче, пĕр союзлă государство системинче мĕнпур совет халăхĕсен интересĕсем пĕр пек пулнине уççăн та тарăннăн ăнланса тăни çинче никĕсленсе тăрать.

Совет халăхĕсен союзĕ, вĕсен туслăхĕпе тăванлăхĕ, вĕсен пĕрлĕхĕ, мирлĕ вăхăтри çирĕп тĕрĕслӳ витĕр тухса, вăл тĕрĕслеве тӳссе иртерчĕç. Сталин юлташ çапла калать: «Социализм никĕсĕ çинче нумай нациллĕ государство туса хунин опычĕ ăнăçлă пулчĕ», тет («Ленинизм ыйтăвĕсем», стр. 513).

Совет халăхĕсен союзĕ, вĕсен туслăхĕпе тăванлăхĕ, вĕсен пĕрлĕхĕ вăрçă вăхăтĕнчи йывăр тĕрĕслеве те тӳссе иртерчĕç. «Пирĕн çĕршыври халăхсен туслăхĕ, — тенĕ Сталин юлташ,—вăрçăн пур йывăрлăхĕсемпе инкекĕсене те тӳссе иртерчĕ, совет çыннисем фашистла захватчиксене хирĕç туса пыракан пĕтĕмĕшле кĕрешӳре тата ытларах çирĕпленчĕ. Çакăнта ĕнтĕ Совет Союзĕн вăйĕн çăлкуçĕ» («Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен», стр. 109).

Пирĕн халăх идейăпа мораль тĕлĕшĕнчен питĕ вăйлине вăрçă лайăх кăтартса пачĕ. Совет çыннисем тăшмана хĕçпăшал вăйĕпе кăна мар, хăйсен мировоззренийĕ пахă пулнипе те çĕнтерсе пыраççĕ.

Çакăнта ĕнтĕ пирĕн мухтавлă парти ленинла-сталинла идеологийĕ çĕнтерсе чапа тухни тата унăн пурне те çĕнтерсе пыракан хăвачĕ палăрать.

4. Ленин—Сталин партийĕ совет халăхне тăшмана таткăлăн çĕнтересси патне илсе пырать

Отечественнăй вăрçăра совет халăхĕ хăйĕн çĕршывне вĕçне çитиех çупраса хăварма пултарчĕ пулсан, унăн çарĕ вара, тăшмана хăюллăн аркатса, хĕвеланăçнелле малалла вăркăнса пырать пулсан, çавна пула эпир тăшмана таткăлăн çĕнтересси патне çитсе тăтăмăр пулсан, çакăн сăлтавĕ вара —пирĕн парти ленинла аслă политика тытса пынинче пулать.

Хăйĕн ретĕнче пирĕн Совет çĕршывĕн чи ăнлануллă, чи çирĕп, вĕçне çитиех çирĕп патриотсене пĕрлештерсе тăракан большевиксен партийĕ, Ленин ялавне çирĕп тытса пырса, совет халăхне хамăрăн советла Тăван çĕршыва чун-чĕререн парăнса юратса тăма тимлĕн вĕрентсе пынă. Пирĕн çĕршыври пуянлăха тытса илме хăтланакан тăшмансем çинчен пирĕн парти рабочисене, хресченсене, интеллигенцие Ленин сăмахĕсемпе çапла каланă: «Пирĕн вĕсене çав тери хытă вĕрентмелле, вĕсем хăйсен ачисене те, внукĕсемпе вĕсен ачисене те, ун пек ан тăвăр тесе, хушса хăварччăр...» (т. XXV, стр. 299). Парти тытса пыракан ленинла çак политика хыççăн совет халăхĕ пĕр пăркаланмасăр пырать. Совет Союзĕ—патриотсен, патриот-воинсен, патриот-ĕççыннисен çĕршывĕ. Пирĕн партин ленинла çулĕ совет обществине çирĕпленсе чечекленесси патне илсе пычĕ.

Çакăнта ĕнтĕ пирĕн партин аслă вăйĕ палăрчĕ.

Çак вăрçăра большевиксен партийĕ хăйĕн ялавĕсем тавра вуншар миллион совет çыннисене Тăван çĕршыва хӳтĕлĕмешкĕн пухма пултарчĕ, Совет Союзĕ çине тапăннă тăшмансене йывăр условисенче аркатса тăкма пултарчĕ. Сталин юлташ çапла каларĕ: «Государствăсен историйĕнче, çĕршывсен историйĕнче, çарсен историйĕнче ăнăçлăхсем тума тата çĕнтерме пур майсем те пулнă тапхăрсем сахал мар пулнă, анчах çав майсем ахалех юлнă, мĕншĕн тесен руководительсем çав майсене курман пирки, вĕсемпе усă курма пĕлмен пирки çарсем поражени тӳснĕ» («Ленинизм ыйтăвĕсем», 11-мĕш издани, стр. 323). Историллĕ çак опыта пирĕн парти пĕтĕмĕшпех шута илнĕ. Большевиксен партийĕ тăшмана çĕнтерме пулăшакан майсене пĕрине те манса хăварман. Миллионшар совет çыннисене парти тăшмана хирĕç кĕрешме хавхалантарса çĕклерĕ, совет халăхĕн пур вăйĕсене те ӳстерсе пычĕ, халăха пирĕн тĕрĕс ĕç çĕнтерес шанчăкпа хĕçпăшаллантарчĕ. Совет çыннисем аслă Ленин сăнарĕпе хавасланса, аслă Сталин юлташ ятне асра тытса çапăçăва тухрĕç. (АЛА ÇУПАÇÇĔ). Пирĕн партин ленинла çулĕ тăшмана хирĕç кĕрешсе историллĕ çĕнтерӳсем тăвасси патне илсе пычĕ.

Çакăнта ĕнтĕ пирĕн партин аслăлăхĕ палăрчĕ.

Отечественнăй вăрçăра пĕтĕм халăх ĕçне упраса хăварма пултарнă Ленин—Сталин партийĕ халĕ совет воинĕсемпе ĕççыннисем хушшинче татах та ытларах паллă авторитетлă, халăхпа татах та тачăрах çыхăнса тăрать.

Пирĕн большевиксен партийĕн авторитечĕ çирĕп, ăна никам та хавшатма пултараймасть. Ахальтен мар ĕнтĕ вăрçăн йывăр вăхăтĕнче çĕнĕрен миллионшар рабочисем, колхозниксем, интеллигентсем хăйсен тур-

(Юлашки 4-мĕш страницăра)

Г. Ф. Александров юлташ тунă докладăн вĕçĕ

(*Пуçламăшĕ ·-мĕш страницăра*).

нăçне Ленин—Сталин партийĕн пурнăçĕпе çыхăнтарчĕç. Халĕ пирĕн партире 5 миллион та 700 пин çын шутланать! Большевиксен партийĕ иртнĕ çулсем хушшинче Ленин çулĕпе пыни пирĕн партие паллă çĕнтерÿсем патне илсе пычĕ, ăна тата ытларах вăйлатрĕ, унăн ретне çирĕплетрĕ.

Çакăнта ĕнтĕ пирĕн партин историллĕ тĕрĕслĕхĕ, унăн руководствин вăйĕ палăрчĕ.

Большевиксен партине Ленин пĕрмаях малалла кайса пыма вĕрентнĕ. Сталин юлташ халăха халиччен тунă çитĕнÿсем çинче нихăçан та чарăнса тăма юраманни çинчен, ăнăçлăхсемпе лăпланса ларма кирлĕ марри çинчен, пĕр чарăнмасăр малалла кайса пыма кирли çинчен, пĕтĕм вăя çĕнĕрен те çĕнĕрен пĕтĕçтерсе, тăшманран темиçе хут вăйлăрах пулса тăрса, ăна пĕтĕмпех аркатса тăкмалли çинчен вĕрентет. Партин ленинла политики, çĕнĕрен те çĕнĕ пуласлăхсем уçса пыракан, тата паман задачăсене пурнăçлама партие мобилизацилекен политика большевиксене витĕр куракан, çирĕп тата хăюллă пулма вĕрентрĕ.

Çакăнта ĕнтĕ пирĕн партин вăйĕ тата вăл инçене курма пултарни палăрчĕ.

Коммунистсен партине Ленин общество аталанăвĕн законĕсене пур енчен те пĕлсе тăма, Совет государствине тумалли законсене пĕлсе тăма вĕрентсе хĕçпăшаллантарчĕ. Ленин вилнĕ хыççăн общество аталанăвĕ мĕнле кăткăсланни пуриншĕн те паллă. Çапах та, пирĕн парти, Сталин юлташ çĕнĕ те аслă тата йывăр задачăсене, вĕсене Ленин татса панă пекех, тарăннăн, хăюллăн, тĕрĕс те витĕр курса татса пачĕ.

Çакăнта ĕнтĕ большевиксен партийĕн вăйĕ тата ăна никам çĕнтерейменни палăрчĕ.

Сталин юлташ пирĕн большевиксен партие пролетариатăн аслă стратегĕн, Ленин юлташăн çарĕ тесе калать. Совет çыннисем çав хавхалантаракан сăмахсене пĕлеççĕ те, юратаççĕ те. Паянхи кун совет халăхĕ вăл сăмахсене тата ытларах хавхаланса илсе çапла калать: Эпир, совет çыннисем пурте, Ленин юлташ çарĕнче, Сталин юлташ çарĕнче тăратпăр. Вĕсен ялавĕсем айĕнче тăрса, совет çыннисем çав тери пысăк çĕнтерÿсем турĕç. Сталин юлташ çапăçăва илсе каякан çарта пуласси çинчен пысăкрах чыс çук! (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Сывă пултăр пирĕн большевиксен мухтавлă партийĕ, Ленин—Сталин партийĕ!

Сывă пултăр Хĕрлĕ Çар—ирĕклĕхшĕн кĕрешекен çар!

Сывă пултăр ленинизм—пирĕн шанчăклă, çĕнтерÿллĕ ялав!

Сывă пултăр пирĕн паттăр çарăн, совет халăхĕн аслă çулпуçĕ—Сталин юлташ! (Пĕтĕм зал тăвăллăн алă çупать. Лару участникĕсем, ура çине тăрса, парти гимне—«Интернационала» юрлаççĕ).

В. И. Ленин вилнĕренпе 21 çул тултарнă ятпа пулса иртнĕ хурлăхлă-чаплă лару

Январĕн 21-мĕшĕнче, Кремльти Дворецăн Пысăк залĕнче, ВКП(б) Центральный Комитечĕн, ВКП(б) Мускав облаçĕпе хула комитечĕсен, СССР тата РСФСР Верховный Совет Президиумĕсен, ĕççынни депутачĕсен Мускав облаçĕпе хула Совечĕсен, ВЛКСМ Центральный Комитечĕн, ВЛКСМ Мускав облаçĕпе хула Комитечĕсен тата ВЦСПС Президиумĕн Владимир Ильич Ленин вилнĕренпе 21 çул тултарнă ятпа парти, общество тата Хĕрлĕ Çар представителĕсемпе пĕрле туса иртернĕ хурлăхлă-чаплă ларăвĕ пулнă.

Ленинăн скульптурипе илемлетнĕ çав пысăк зал аслăн та чаплăн курăнса ларать. Унăн сăнне кашни совет çынни пĕлет. Кунта СССР Верховный Совет сессийĕсен ларăвĕсем, парти съезчĕсемпе конференцийĕсем пулса иртнĕ. Кунта çĕршывăн чи паллă çынсем партипе правительство руководителĕсемпе тĕл пулнă, кунта пĕрре кăна мар Сталин юлташ сăмах тухса каланă. Çакăнтан, çак трибуна çинчен Сталин сăмахĕсем пĕтĕм çĕршыва саланнă, совет халăхне унăн ĕçĕсемпе кĕрешĕвĕн пуласлăхĕ çинчен пĕлтерсе хавхалантарнă. Паян кунта Ленинсăр пурăнса иртнĕ тата тепĕр çулталăкăн — çирĕм пĕрремĕш çулталăкăн, Ленинăн вилĕмсĕр идейисем çĕнтернĕ тепĕр çулталăкăн итогĕсене пăхса тухаççĕ.

Вăл итогсене аслă Сталин ертсе пыракан Хĕрлĕ Çар вăрçă историйĕнче нихăçан курман пек пысăк наступлени туса пынă кунсенче, фашистла тискерсене аркатса пынă кунсенче пăхса тухаççĕ.

Залра хавасăх палăрать. Пурте Сталин юлташа вăйлăн хумханса кĕтеççĕ. 6 сехет те 50 минутра Президиум сĕтелĕ умне Сталин тата унăн çывăх соратникĕсем—Молотов, Калинин, Ворошилов, Андреев, Микоян, Берия, Шверник, Маленков, Вознесенский юлташсем пырса тăрсан, пĕтĕм зал хаваслăнипе тăвăллăн алă çупать.

Ларура пулнисем темиçе минута хушши пĕр чарăнмасăр алă çупса, ура çинче тăрса, Сталин юлташа саламлаççĕ. Сталин юлташа пирĕн халăх Ленин ĕçне тĕрĕссĕн малалла илсе пыракан, Ленин туса хунă Совет государствин организаторĕ тата унăн çĕнтерĕвĕсене хавхалантаракан тесе шутлать. Сталин—паянхи Ленин! Халăх ăна яланах çав тери юратать, халь пурте ун çине пăхса тăраççĕ. Сталин çине çавăн пек пăхса тăнинче фронтри тата тылри темиçе миллион çын ăна Ленин ялавне çÿле çĕклесе илсе пынăшăн чун-чĕререн çав тери тав туни палăрать.

М. И. Калинин юлташ хурлăхлă-чаплă ларăва уçни çинчен пĕлтерет.

—Шăп 21 çул каярах,—тет М. И. Калинин,—çак минутсенче Владимир Ильич Ленин вилсе кайрĕ. Ура çине тăрса, ăна асăнма ыйтатăп.

Пурте ура çине тăраççĕ.

М. И. Калинин доклад тума Г. Ф. Александров юлташа сăмах парать. (ТАСС).

Верховный Главнокомандующине Совет Союзĕн Маршалне СТАЛИНА

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

Пирĕн асаплă столицăна Варшава хулине ирĕке кăларнипе, пирĕн темиçе миллион тăвана, темиçе пин хулапа яла ирĕке кăларнипе савăнса, Сире, Сталин Маршал, пĕтĕм поляк халăхĕ ячĕпе тата Сирĕн урлă пĕтĕм паттăр Хĕрлĕ Çара, пĕтĕм совет халăхне чун-чĕререн тав тăватпăр.

Хăйĕн ирĕклĕхне тата никама пăхăнманлăхне совет хĕçпăшалĕ чаплă çĕнтерÿсем тунипе пула çеç, паттăр совет боецĕсен юнĕ нумай тăкăннипе пула çеç çĕнĕрен йĕркелесе яма пултарнине поляк халăхĕ нихăçан та манас çук.

Нимĕç пусмăрĕнчен хăтăлнипе савăнса ирттерекен кунсем пирĕн икĕ халăх хушшинчи иксĕлми туслăха тата ытларах çирĕплетĕç.

Польша Халăх Совечĕн Президенчĕ
БЕРУТ
Вăхăтлăх Правительствăн Премьер-Министрĕ
ОСУБКА-МОРАВСКИЙ
Польша Çарĕн Главнокомандующийĕ
Генерал-полковник
РОЛЯ-ЖИМЕРСКИЙ

Польша Халăх Совечĕн Президентне Б. БЕРУТ господина, Польша Республикин Вăхăтлăх Правительствин Премьер-Министрне Э. ОСУБКА-МОРАВСКИЙ господина, Польша çарĕн Главнокомандующине М. РОЛЯ-ЖИМЕРСКИЙ генерал-полковника

ЛЮБЛИН.

Польша республикин столицине Варшава хулине ирĕке кăларнă ятпа туслăн саламланăшăн Сире чĕререн тав тăватăп.

Хĕрлĕ Çарпа Польша çарĕ пĕрлешсе кĕрешнипе тăванла поляк халăхне нимĕçсен фашистла захватчикĕсен пусмăрĕнчен татăклăн ирĕке кăларассине шанса тăратăп.

Ирĕклĕ тата никама пăхăнман демократиллĕ Польша сывă пултăр!

И. СТАЛИН.

1945 çулхи январĕн 19-мĕшĕ.

140 ПИН ÇĔНĔ СПЕЦИАЛИСТ

Чи пысăк аслă шкулсенчен вĕренсе тухакансем февраль уйăхĕнче диплом проекчĕсене хÿтĕлеме пуçлаççĕ. Малтанлăха палăртнă тăрăх, аслă шкулсенчен кăçал 40.000 специалист вĕренсе тухмалла. Техникумсем халăх хуçалăхĕпе культурăн тĕрлĕ енĕсемпе 100.000 квалификациллĕ работник вĕрентсе кăларасçĕ.

Çамрăк специалистсене валеçес тĕлĕшпе наркоматсен, шкулсен, обществăллă организацисен представителĕсенчен комиссисем туса хураççĕ. Вĕренсе тухакансене чи малтан юсаса хута яракан тата çĕнĕрен тăвакан предприятисене яраççĕ. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

ЯНВАРĔН 20-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКĂН ВĔÇĔ

БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронт çарĕсем, январĕн 20-мĕшĕнче Хĕвелтухăç Пруссири ТИЛЬЗИТ, ГРОСС СКАЙСГИРРЕН, АУЛОВЕНЕН, ЖИЛЛЕН тата КАУКЕМЕН хулисене—çулсен паха узелĕсене тата нимĕçсен КЕНИГСБЕРГ хули енчи оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕсене—штурмласа туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 250 пункта йышăннă, вăл шутра—КАРКЕЛЬН, РАГИНГ, СКЕПЕН, БРИТАНИН, РУКЕН, ЙУБАЙТШЕН, ГРЮНХАЙДЕ, ШТАБЛЯКЕН, БИРКЕНФЕЛЬДЕ, КУТТЕН, БИБЕЛЕН, БЛУМБЕРГ, ПРОЙСЕНДОРФ ялĕсем, ПОМЛЕТТЕН, АРГЕНИНГКЕЙ, ВЕРФЕН, ГРЮНХАЙДЕ, БАЙТЧЕН чугун çул станцийĕсем.

БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт çарĕсем çаплах наступлени туса пынă, Польша çĕрĕнче ХОЖЕЛЕ, ЯНОВО, ЗЕЛЮНЬ, БЕЖУНЬ, ДРОБИН, ВЫШОГРУД хулисене туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 500 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—ДУРЛЯСЫ, МАЛЕХОВО, ГАЧИСКА, ЕДНОРОЖЕЦ, РЕМБЕЛИН, БЕЛЯВЫ, БЯЛУТЫ, СКУРПЕ, ВЫЛЯЗЛОВО, ЛЮБОВИДЗ, БРУДНИЦЕ, ЖУРОМИН, ЛИПНИКИ, КОЗЕБРОДЫ, ГУРА, БОРОВИЦЕ, ОРШИМОВО ятлă пысăк ялсем.

БЕЛРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, танковăй соединенисемпе пехота çав тери хăвăрт наступлени туса пынипе, январĕн 20-мĕшĕнче ВЛОЦЛАВЕК тата БЖЕСЬЦЬ-КУЯВСКИ хулисене—çулсен пысăк узелĕсене тата нимĕçсен ВИСЛА шывĕн сулахай хĕрринчи оборонин тĕреклетнĕ пункчĕсене—туртса илнĕ. Çавăнпа пĕр вăхăтрах фронт çарĕсем ВАРТА шывĕ урлă каçса кайнă та КОЛО хулине йышăннă. Çавăн пекех малалла тапăнса пырса, фронт çарĕсем январĕн 20-мĕшĕнче ГОМБИН, КОВАЛЬ, ХОДЕЧ, ДОМБРОВИЦЕ, ОЗОРКУВ, ПАБЯНИЦЕ, ТУШИН, ЛАСК хулисене туртса илнĕ тата халăх пурăнакан ытти 1.000 пункта ытла йышăннă.

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, малалла наступлени туса пырса, ВИДАВА, ЛЮБЛИНЕЦ, ОЛЬКУШ, БЖЕСКО хулисене туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 300 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—ШЕРЦУВ, РУСЕЦ, ОСЯКУВ, СКОМЛИН, МЛЫНИСКО, МЕЛЕШИН, ХОТЫНИН, ЛУБНИЦЕ, ПШДОШОЦЕ, БАНКОВИЦЕ, ЛУГИ-РАДЛЫ, КАМИНЬСКО, КОЗЕГЛОВЫ, ЛАЗЫ, ПОМОЖАНЫ, ОСТРЕЖНИЦА, БОЖЕНЦИН, ШЕПАНУВ ятлă пысăк ялсем тата ВИДАВА, РУСЕЦ, ПАНКИ, КУЛМИЕ, ГЕРБЫ, БОГУМИЛОВЦЕ, БЯДОЛИНЫ чугун çул станцийĕсем.

УКРАИНĂРИ 4-мĕш фронт çарĕсем Карпат тăвĕсен тăрăхĕнчи сăртлă-вăрманлă вырăнти йывăр условисенче наступлени туса пырса, январĕн 20-мĕшĕнче, тăшманпа çапăçса, Польша çĕрĕнчи НОВО-СОНЧ хулине тата Чехословаки çĕрĕнче ПРЕШОВ, КОШИЦЕ, БАРДЕВА хулисене—çулсен паха узелĕсене тата нимĕçсен оборонин тĕреклетнĕ пункчĕсене—туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 450 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—КРУЛЮВКА, СЛОПНИЦЕ, БОГУША, БЕРЕСТ, ЗБОРОВ, КЛЮШОВ, ВЕЛИКИЙ ШАРИШ, СОЛИВАР, ОБИШОВЦЕ, ШАЦА, ВЕЛИКАЯ ИДА, МОКРАНЦЕ ятлă пысăк ялсем тата ПИСАЖОВА, КАМЕНКА, БАРДЕВА, КЛЮШОВ, ГЕРТНИК, ОСИКОН, СЛОВАЦКАЯ, РАСЛАВИЦЕ, ДЭМЬЯТА, КАПУШАНЫ, ВЕЛИКИЙ ШАРИШ, МОЛЬДАВА, ВЕЛИКАЯ ИДА, ХАНИСКА, ВАРЦА чугун çул станцийĕсем.

БУДАПЕШТ районĕнче пирĕн çарсем çаплах тăшманăн хулан хĕвеланăç пайĕнче (БУДАРА) хупăрласа илнĕ гарнизонне пĕтерсе тăкассишĕн çапăçнă.

СЕКЕШФЕХЕРВАР хулинчен кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсен атакисене сире-сире янă. Унта тăшман хĕвелтухăçнелле, Дунай шывĕ патнелле татса тухма хăтланать.

Малтанлăха палăртнă тăрăх, кăçалхи январĕн 12-мĕшĕнчен пуçласа 19-мĕшне çитиччен наступлени туса пынă вăхăтра БЕЛОРУССИРИ 1-мĕшпе 2-мĕш фронт çарĕсем тата УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем 25 пин нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ, 480 танк тата 1.079 тупă туртса илнĕ. Тăшманăн, пĕр вилнисене кăна шутласан та 65 пин салтакпа офицер ытла пĕтнĕ. Юлашки вăхăтра пирĕн çарсем нимĕçсен 344-мĕш, 595-мĕш, 712-мĕш пехотнăй тата 11-мĕш танковăй дивизисенче тăракан салтаксемпе офицерсене тыткăна илнĕ. Ку дивизисене нимĕçсем Хĕвеланăç Европăри фронтран куçарса килнĕ.

Январĕн 19-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 190 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 46 самолетне персе ÿкернĕ.

ЯНВАРĔН 21-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронт çарĕсем январĕн 21-мĕшĕнче Хĕвелтухăç Пруссири ГУМБИННЕН хулине — çулсен паха узелне тата нимĕçсен КЕНИГСБЕРГ хули енчи оборонин вăйлă çирĕплетнĕ пунктне штурмласа туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 200 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — АЛЬТЛАППИНЕН, ЗЕКЕНБУРГ, ТАВЕ, ГИЛЬГЕ, ШЕНКЕНДОРФ, ГРОСС ФРИДРИХСДОРФ, ГРОСС ГИРРАТИШКЕН, МЕЛЯУКЕН, ПОПЕЛЬКЕН, ПАКИНЬЕРН, ПАДРОЙЕН, КУБЕЕЛЬН, КУТТКУНЕН, ВИЛЬКЕН, ЙУКНИШКЕН, КЕНИГСФЕЛЬДЕ, ГАБАЙДТЕН, ПЛАВИШКЕН ятлă пысăк ялсем тата МЮЛЕНАУ, МЕЛЯУКЕН, БУХХОВ чугун çул станцийĕсем.

БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт çарĕсем нимĕçсен Хĕвелтухăç Пруссири кăнтăр чиккинчи вăйлă çирĕплетнĕ оборонине татнă та ХĔВЕЛТУХĂÇ ПРУССИ çĕрне 80 километр сарлакĕш фронтпа 25 километр шалалла кĕрсе кайнă, январĕн 21-мĕшĕнче НАЙДЕНБУРГ, ТАННЕНБЕРГ, ЕДВАБНО тата АЛЛЕНДОРФ хулисене—нимĕçсен оборонин тĕреклетнĕ паха пункчĕсене — туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 450 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—ФЛАМБЕРГ, ГРОСС ДАНКХАЙМ, РОКЛАСС, ДЕМБОВИТЦ, ШУГТШЕН, КАЛЬТЕНБОРН, ГУТФЕЛЬД, РОНЦКЕН, СКОТТАУ, ХЕЕЗЕЛИХТ ятлă пысăк ялсем тата ГРОСС ДАНКХАЙМ, ПУХАЛЛОВЕН, МУШАКЕН, ГРЮНФЛИСС, ГРОСС КОЗЛА чугун çул станцийĕсем. Çавăнпа пĕр вăхăтрах фронт çарĕсем Польша çĕрĕнче ЛИДЗБАРК (ЛАУТЕНБУРГ), ЛЮБАВА, НОВЕ-МЯСТО, СЕРПЦ тата ПЛОЦК хулисене туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 450 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — УЗДАУ (УЗДОВО), ГРАЛЕВО, ВОМПЕРСК, СЛУП, ЛЮТОЦИН, БУЛАСЫ, БЯЛЫШЕВО, ГОЗДОВО, БЕЛЬСК, ЦЯХЦИН ятлă пысăк ялсем, ПЛАСНИЦА, ГОЗДОВО чугун çул станцийĕсем.

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем çаплах наступлени туса пынă, РАДЗЕЮН, СОМПОЛЬНО, ДЕМБЕ, УНЕЙУВ, ПОДДЕМБИЦЕ, ШАДЕК, ЗДУНЬСКА ВОЛЯ хулисене туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 600 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—СЛУЖЕВО, ПШИСЕК, БРДУВ, КЛОДАВА, ДЖЕВ, ЧЕМРУДОЛИЯ, ЛЮБОЛЯ, БЖЕГ ялĕсем, ХОЦЕНСКЕ, ХОДЕЧ, КАМЕННА, ОСТРОВЫ, ТУЖИНУВ, БАРЛОГИ, ДЕМБЕ, ЯДВИСИН, БАЛДЖИХУВ, ОТОК, ШАДЕК чугун çул станцийĕсем.

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, ЧЕНСТОХОВА хулинчен хĕвеланăçнелле наступлени туса пырса, Германин кăнтăр-хĕвелтухăç чиккинчи вăйлă çирĕплетнĕ оборонине татнă та Нимĕç Силезине 90 километр сарлакĕш фронтпа 30 километр шалалла кĕрсе кайнă, паян, январĕн 21-мĕшĕнче, КРАЙЦБУРГ, РОЗЕНБЕРГ, ПИТШЕН, ЛАНДСБЕРГ, ГУТТЕНТАГ хулисене—çулсен паха узелĕсене тата нимĕçсен БРЕСЛАУ хулине пырса кĕмелли çулсене хÿтĕлекен оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕсене—туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, Германи çĕрĕнче халăх пурăнакан ытти 250 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—РАЙНЕРСДОРФ, ЯКОБСДОРФ, ШЕНВАЛЬД, ЛЮДВИГЕДОРФ, БАНКАУ, ТЕЙХВЕЛЬДЕ, КИРХВАЛЬДЕ, РАДАУ, ФЕРЕНДОРФ, БАХХЕЙДЕН ятлă пысăк ялсем тата КОСТАУ, БИШДОРФ, ШЕННАЛЬД, БАНКАУ, ШИРОКА, ЧАШНАУ чугун çул станцийĕсем. Фронт çарĕсем Польшăра ЗЛОЧЕВ, ВЕРУШУВ, ЗАВЕРЦЕ, СЕВЕШ, БОХНЯ хулисене туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 200 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—ВЫШАНОВ, СЬВИБА, ЛЯСКИ, КОСЕНЦИН, ВОЗНИКИ, БРУДЗОВИЦЕ, ЗОМБКОВИЦЕ, СЛАВКУВ, СТАЧИНУВ, МЫСЬЛЯХОВИЦЕ, БРОДЛА, ТЫПЕЦ, ДЗЕВИН ялĕсем, СЬВИБА, ЛЕНКА, КОСЕНЦИН, ШТАЛЬХАММЕР, ЗОМБКОВИЦЕ, ДУЛЬОВА чугун çул станцийĕсем.

КРАКОВ хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, Польшăра халăх пурăнакан 60 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—ЗРЕНЧИЦЕ, РАЦЕХОВИЦЕ, ВИСЬНЕВА, КАСИНА ВЕЛЬКА, ЮРКУВ-ДОЛЬНЫ, ЛАБОВА, ТЫЛИН, КРЫНИЦА ятлă пысăк ялсем тата ТЫМБАРОК, КАСИНА ВЕЛЬКА чугун çул станцийĕсем.

ЧЕХОСЛОВАКИРЕ КОШИЦЕ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем ЛЮТИНА, САБИНОВ, ШИРОКЕ, ГРАБКОВ, КЛЕМБАРОК, НИЖНИЙ ТЕЙКЕШ ялĕсене илнĕ.

БУДАПЕШТ хулинче пирĕн çарсем хулан хĕвеланăç пайĕнче (БУДАРА) хупăрласа илнĕ гарнизона пĕтерессишĕн çапăçнă.

СЕКЕШФЕХЕРВАР хулинчен кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсен атакисене сире-сире, тăшмана пысăк çухату кÿнĕ.

Январĕн 20-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 177 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 71 самолетне персе ÿкернĕ.

ЯНВАРĔН 22-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронт çарĕсем январĕн 22-мĕшĕнче Хĕвелтухăç Пруссири ИНСТЕРБУРГ хулине — çулсен паха узелне тата нимĕçсен КЕНИГСБЕРГ хули патнелле пымалли çулсем çинчи оборонин хăватлă çирĕплетнĕ районне—штурмласа туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 200 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—НЕМОНИН, КАРЛЬСРОДЕ, АГИЛЛА, МИНХЕНВАЛЬДЕ, ЖАРГИЛЛЕН, АУГСТАГИРРЕН, АЛЬТ-ГЕРТЛАУКЕН, АЖЛАКЕН, КЕЛЛМИШ, ДАМЕРАУ, ВИЛЬКЕНДОРФ, ПЕТЕРСДОРФ, ТАПЛАККЕН, ЗАЛАУ, ВИТКАЛЛЕН, ГЕОРГЕНТАЛЬ, КАРТЕНИНГЕН, ЖАМАЙТШЕН, ЙЕБЛОНСКЕН, КОВАЛЕН, МИРУНСКЕН.

БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт çарĕсем, Хĕвелтухăç Пруссинче çав тери хăвăрт наступлени туса пырса, январĕн 22-мĕшĕнче АЛЛЕНШТАЙН, ОСТЕРОДЕ тата ДОЙТШ-АЙЛАУ хулисене—чугун çулсемпе шоссе çулĕсен паха узелĕсене тата нимĕçсен Хĕвелтухăç Пруссин вăтаçĕрти районĕсене кăнтăр енчен хÿтĕлесе тăракан оборонин вăйлă çирĕплетнĕ пункчĕсене—туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла йышăннă. Çавăнпа пĕр вăхăтрах фронт çарĕсем Польша çĕрĕнче çулсен паха узелне ГЫПИН хулине туртса илнĕ, халăх пурăнакан ытти 250 пункта çапăçса йышăннă, вăл шутра—РАДОМНО, НОВЫ ДВУР, СУГАЕНКО, СВЕРЧИНЫ, СКРЫЛЬНО, БЛИННО, СКЕМПЕ, ПАВЛОВО, МАЛЯНОВО, СТАРЕ, МОХОВО, ТЛУХУЗКО, ВЕЛЬКА-ТУЖА, ДОБЖИН.

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, малалла наступлени туса пырса, январĕн 22-мĕшĕнче ХОЭНЗАЛЬЦА (ИНОВРОЦЛАВ) АЛЕКСАНДРОВ, АРГЕНАУ тата ЛАБИШИН хулисене —çулсен паха узелĕсене тата нимĕçсен БРОМБЕРГ (БЫДГОЩ) хули патнелле пымалли вырăнсенчи оборонин тĕреклетнĕ пункчĕсене—çапăçса туртса илнĕ. Каç пулса çитнĕ тĕлелле фронт çарĕсем, танковăй соединенисемпе пехота çав тери хăвăрт наступлени туса пынипе, ГНЕЗЕН (ГНЕЗНО) хулине—чугун çулсемпе шоссе çулĕсен паха узелне тата нимĕçсен ПОЗНАНЬ хули патнелле пымалли çулсем çинчи оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пунктне—туртса илнĕ. Наступлени туса пынă чух фронт çарĕсем январĕн 22-мĕшĕнче тата КРУШВИТЦ, ПЕТРКУВ-КУЯВСКИЙ, ПОВИДЗ, КЛЕЧЕВ, ВЛАДИСЛАВУВ, ВАРТО, СТАВ хулисене тата халăх пурăнакан ытти 1.000 пункта ытла йышăннă.

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем ЧЕНСТОХОВА хулинчен хĕвеланăçнерехре Германи çĕрĕнче шоссе çулĕсен паха узелĕсене—КОНШТАДТ тата ГРОСС СТРЕЛИТЦ хулисене туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, нимĕçсен халăх пурăнакан ытти 150 пунктне ытла йышăннă, вăл шутра — ГЛАУШЕ, КАУЛЬВИТЦ, БУХЕЛЬСДОРФ, ХЕЙНЕРОДОРЧ, ЛОНДАУ, КАРЛСРУЕ, ГЕРМАНСТАЛЬ, ЗАЛЬЦБРУНН, БРЮННЕР, ЛУГЕНДОРФ, ИЛЬНАУ, ФИХТЕН, ФРИДДИХСГРЕТЦ, ЗАНДОВИЦ, ХОНИКК ятлă пысăк ялсем тата НОЛЬДАУ, ОБЕРВАЛЬДЕН, ШМАРДТ, КИФЕРНВАЛЬДЕ, ГЕРМАНСТАН чугун çул станцийĕсем.

Январĕн 12-мĕшĕнчен пуçласа 21-мĕшне çитиччен вунă кун хушши наступлени туса пынă вăхăтра УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем тăшмана çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен çакăн пек çухатусем тÿстерни: ПЕТЕРСЕ ТĂКНĂ—танксемпе хăй тĕллĕн çÿрекен тупăсем—480, тупăсем—900 ытла, бронетранспортерсем—420, автомашинăсем—15.000 ытла. Тăшманăн, пĕр виллисене кăна шута илсен те, 60.000 салтакпа офицер ытла пĕтнĕ.

Çав вăхăт хушшинче фронт çарĕсем çакăн пек трофейсем ТЫТСА ИЛНĔ: танксемпе хăй тĕллĕн çÿрекен тупăсем—254, тупăсем—1.580, минометсем—2.500 ытла, бронетранспортерсем—244, автомашинăсем—6.500, паровозсем—22, чугун çул вагонĕсем—1.200, апат-çимĕç тата çар пурлăхĕн тĕрлĕ склачĕсем нумай тата артиллерин пысăк склачĕсем, 21.000 нимĕç салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

КРАКОВ хулинчен кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, Польша çĕрĕнче ВЕЛИЧКА хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 50 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—КОЗЬМИЦЕ, ГДУВ, ВИНЯРЫ, БЖСНЧОВИЦЕ, ДОВЧИЦЕ, МЫСЛЕНИЦЕ, КАСИНКА, МШАНА ДОЛЬНА, БЕГОНИЦЕ, ГОМЖИСКА, УГРЫНЬ, МУШИНА ятлă пысăк ялсем, КОШИЦЕ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, Карпат тăвĕсен тăрăхĕнчи сăртлă-вăрманлă вырăнти йывăр условисенче çапăçса, Чехословаки çĕрĕнче КАМЕНИЦА, КРИВЬЯНЫ, РОШКОВЯНЫ, РЕНЦИШОВ, КЛУКНАВА, ГЕЛЬНИЦА, ЗЛАТА, ИДКА ялĕсене йышăннă.

БУДАПЕШТРА пирĕн çарсем тăшманăн хупăрласа илнĕ гарнизонне пĕтерсе тăкассишĕн çапăçнă, хулан хĕвеланăç пайĕнче (БУДАРА) 20 квартал йышăннă.

СЕКЕШФЕХЕРВАР хули районĕнче пирĕн çарсем çаплах тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсен атакисене сире сире янă. Хăйĕн çыннисемпе техникине нумай пĕтерсе çапăçнă хыççăн тăшман халăх пурăнакан темиçе пункта йышăннă.

Январĕн 21-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 125 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 33 самолетне персе ÿкернĕ.

Польшăри министрсен совечĕ йышăнни

ЛЮБЛИН, январĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Январь уйăхĕнче Польша республикин Вăхăтлăх правительствин министрĕсен совечĕ темиçе лару туса ирттернĕ. Вăл ларусенче паллă решенисем йышăннă. Министрсен совечĕ çумĕнче политика комитечĕпе экономика комитечĕ туса хумалли проекта çирĕплетнĕ. Политика комитетне вице-премьер Гомулка, экономика комитетне промышленность министрĕ Минц ертсе пымалла. Министрсен совечĕн юлашки ларăвĕнче Польшăн çĕнĕ территорийĕсене ирĕке кăларнă май тунă ĕçсем çинчен министрсен кĕске отчечĕсене итленĕ. Министрсен совечĕ йышăннă тăрăх, Польшăн столици паттăр Варшава пулмалла. Правительство ирĕке кăларнă территорири халăха пулăшас тата оккупантсене Польша çĕрĕнчен хăваласа кăларса çĕршыва çĕнĕрен ура çине тăратас тĕлĕшпе уйрăмах нумай ĕçлет.

ПОЛЬША РЕСПУБЛИКИН ВĂХĂТЛĂХ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ПОЛЬШĂН ИРĔКЕ КĂЛАРНĂ РАЙОНĔСЕНЧИ ХАЛĂХА ЧĔНСЕ КАЛАНИ

ЛЮБЛИН, январĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Польша республикин Вăхăтлăх правительстви Польшăн нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă районĕсенчи халăха чĕнсе калани пичетлесе кăларнă. Çав чĕнсе каланинче Польша республикин гражданĕсене пĕтĕм Польша çĕрне ирĕке кăларма ирсĕрсенчен тасатас куна çывхартас шутпа пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме тата кĕрешме чĕннĕ. Çĕнтерÿллĕ Польша çарĕ союзниксен çарĕсемпе пĕрле Берлин хулине пырса кĕрес кун, Германи тытса илсе нимĕçлетнĕ поляк çĕрĕсене каялла тавăрас кун, Польша салтакĕ Одер, Нейс шывĕсем çинче тата Балтика тăрăхĕнче çирĕп тăрас кун çывăх ĕнтĕ.

Чĕнсе каланинче Польша государствине çĕнĕрен туса хурас тĕлĕшпе Польшăн Вăхăтлăх правительстви тунă ситĕнÿсене палăртнă. Польша халăхĕн пĕрлĕхне хирĕç пыракансемпе ним шеллемесĕр кĕрешме кирли çинчен каланă. Чĕнсе каланинче малалла çапла каланă: «Эпир çĕршыва тепĕр хут чĕртсе ярассине, аркатса тăкнă Варшавăна юсаса ситерессине. Ирĕклĕ, никама пăхăнман демократиллĕ Польша тăвассине шанса тăратпăр. Вăл Польша славян халăхĕсем хушшинче малтанхи ретре пымалла, хĕвелтухăçĕнчи кÿршĕпе—Совет Союзĕпе тăванла çыхăнса тăракан Польша пулмалла, çавăн пекех Англипе, Пĕрлешÿллĕ Штатсемпе тата тĕнчери демократиллĕ ытти çĕршывсемпе туслă пурăнакан Польша пулмалла.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, январĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ январĕн 21-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Эхт хулинчен çурçĕртерехре союзниксем Стевенсвеерт хулине туртса илнĕ. Стевенсвеерт хулипе Ситтардом хушшинчи районра союзниксем, хĕвелтухăçнелле куçса пырса, темиçе ял йышăннă.

Мальмеди хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре союзниксем Шоппен ятлă пункта (Рейн облаçĕ) тата Дейденберг хулине тăшмантан тасатнă. Дейденберг хули Бельгири Сен-Вит хулинчен 4 миля çурçĕртерехре ларать. Унтан кăнтăр-хĕвелăнăçнерехре союзниксем Пуртиль хулине йышăннă. Дикирх хулинчен çурçĕрелле тата çурçĕр-хĕвелтухăçнелле куçса пырса, союзниксем Бастендорф хули хĕррине кĕрсе кайнă, халĕ вĕсем Рейн облаçĕнчи Лонгодорф хули патне ситесси инçе юлман.

Тăшман артиллерийĕ Саарлаутерн хули патĕнче тăшмана тапăнма тунă укреплени тăракан союзниксен çарĕсене персе тăнă, çавăн пекех тата Рейн патĕнчи укреплени хĕснĕ. Рейн шывĕпе Сент-Амарен хули хушшинчи участокра союзниксем артиллери пулăшнипе пысăк атака тунă, хăшпĕр секторсенче виçĕ миля таран малалла кайнă.

ЛОНДОН, январĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс тавраш хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ январĕн 21-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: Италире союзниксен çарĕсен патрулĕсем çеç кĕрешнĕ. Йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем ĕнер тăшманăн Австрири тата Германири çул-йĕрĕсене тапăннă.

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔ ГЕРМАНИЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, январĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, американецсен Европăри сывлăш-çар вăйĕсен штабĕ çапла пĕлтернĕ: «Вĕçекен крепость» йышши 750 бомбардировщик ытла, 550 истребитель ытла хÿтĕлесе пынипе, паян Мюнстер хулинчен 25 миля çурçĕртерехре ларакан сортировка станцийĕсене тата Штутгарт хулинчен 25 миля çурçĕртерехре ларакан Гейльбронн хулинчи сортировка станцийĕсене те тапăннă, çавăн пекех тата Манигейм хулинчи Рейн шывĕ çинчи чугун çул кĕперне те тапăннă.

ТЫТКĂНА ЛЕКНĔ ÇЫНСЕН ПЫСĂК УШКĂННЕ ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ПЕРСЕ ПĂРАХНИ

БРАЗЗАВИЛЬ, январĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Браззавильти радио пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 6-мĕшĕ ырап тенĕ чух çĕрле нимĕçсем тыткăна лекнĕ француз, поляк тата совет çыннисен пысăк ушкăнне персе вĕлернĕ. Вăл ĕç çапла пулса иртнĕ. Çĕрле гитлеровецсем тыткăна лекнĕ çыннисене вăратнă та этем шăммисем тиенĕ 36 вагона пушатма хушнă. Тыткăна лекнĕ çынсем вăл приказа пурнăçласшăн пулман. Вара гитлеровецсем вĕсене автоматсемпе персе вĕлернĕ. Куракан çынсем каланă тăрăх, нимĕçсем часчасах фронтран тыла каякан пушă вагонсене заложниксен тата тыткăна лекнĕ çынсен виллисене тиеççĕ. Нимĕçсем этем шăммисемпе промышленноçра усă кураççĕ.

ГРЕЦИРИ ЛАРУ-ТАРУ

ЛОНДОН, январĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио çапла пĕлтерет: Греци регенчĕ Дамаскинос, ют çĕршыв ĕçĕсен, шалти ĕçсен тата çĕрĕç министрĕсемпе тĕл пулса каласма, ЭАМ-а хăйĕн делегачĕсене яма сĕннĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — ?—?7, заместителĕн секретарĕн — 4—2?, парти пурнăç пайĕн 3—97. промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

Типографи № 1, Управления полиграфической промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. ф. б. Тираж 10.000 экз.

НТ 00261.